# МАРК ПĔЛТЕРНĔ ЫРĂ ХЫПАР

## 1-мĕш сыпăк

*Шыва кĕртекен Иоанн вĕрентсе калани*
(Мф. 3:1-12; Лк. 3:1-9, 15-17; Ин. 1:19-28)

1-3 Турă Ывăлĕ Иисус Христос çинчен пĕлтерекен Ырă Хыпар
пророксем çырса хăварнă пекех пуçланать: «Акă Эпĕ Сан умăн-
тан Хамăн хыпарçăна яратăп, вăл Сан валли çул хатĕрлесе ху-
рĕ». «Пуш хирте чĕнекенĕн сасси илтĕнет: „Хуçа Турă валли
çул хатĕрлĕр, Вăл утас çулсене тӳрлетĕр!“» 4 Çавăнпа та Иоанн
килнĕ, вăл пуш хирте тĕне кĕртнĕ, çылăхсене каçарттармаш-
кăн ӳкĕнсе шыва кĕме ӳкĕтленĕ. 5 Вара ун патне пĕтĕм Иудея
çĕрĕнчен те, Иерусалим хулинчен те халăх пыма пуçланă.
Иоанн вĕсене çылăхĕсенчен ӳкĕнтерсе Иордан юхан шывĕнче
пурне те шыва кĕртнĕ. 6 Тăхăнасса Иоанн тĕве çăмĕнчен тунă
тумтир тăхăнса, пилĕкне чĕн пиçиххи çыхса çӳренĕ. Çиессе те
вăл хĕрлĕ шăрчăк тата хăвăлсенче тупкаланă пыл çисе пурăннă.
7 Вăл çапла ӳкĕтлесе вĕрентнĕ: «Ман хыççăн манран Хăватли
килет, эпĕ Унăн пушмакне пĕшкĕнсе хывма та тивĕçлĕ мар.
8 Эпĕ сире шывпа тĕне кĕртрĕм, Вăл вара сире Святой Сыв-
лăшпа тĕне кĕртĕ».

*Иисуса шыва кĕртни*
(Мф. 3:13-17; Лк. 3:21-22)

9 Çав кунсенче Галилея çĕрĕнчи Назарет хулинчен Иоанн пат-
не Иисус та пынă. Иоанн Ăна Иорданра шыва кĕртнĕ. 10 Иисус
шывран тухнă самантрах Иоанн тӳпе уçăлса кайнине, Святой

Сывлăш кăвакарчăн пек курăнса Ун çине аннине асăрханă*.
[11] Тата тӳперен çапла сасă илтĕннĕ: «Эсĕ Манăн савнă Ывăлăм,
Манăн ырă кăмăлăм Санра!»

*Иисуса шуйттан илĕртсе тĕрĕслени*

(Мф. 4:1-11; Лк. 4:1-13)

[12] Çавăн хыççăнах Сывлăш Иисуса пуш хире ертсе кайнă.
[13] Пуш хирте Ăна шуйттан хĕрĕх кун илĕртсе тĕрĕсленĕ. Иисус
тискер кайăксем хушшинче пурăннă, ангелсем Уншăн ĕçлесе тăнă.

[14] Иоана тĕрмене тытса хупнă. Иисус вара Галилейăна пынă
та Турă Патшалăхĕн Ырă Хыпарне ӳкĕтлесе вĕрентнĕ. [15] Вăл
çапла каласа вĕрентнĕ: «Ĕнтĕ вăхăт çитрĕ, Турă Патшалăхĕ
çывхарчĕ: ӳкĕнĕр те Ырă Хыпара ĕненĕр!»

*Иисусăн малтанхи вĕренекенĕсем*

(Мф. 4:18-22; Лк. 5:1-11)

[16] Пĕррехинче Иисус Галилея тинĕсĕ хĕррипе иртсе пынă. Çавăн чухне Вăл тинĕсе сĕреке-тетел пăрахакан пĕртăвансене –
Симонпа унăн шăллĕне Андрея – курнă. Вĕсем пулăçăсем пулнă. [17] Иисус вĕсене çапла каланă: «Ман хыççăн пыракансем пулăр, Эпĕ сире этем чунĕсене тытакансем тăвăп». [18] Вĕсем вара
çав самантрах сĕреке-тетелĕсене хăварса Иисус хыççăн кайнă.
[19] Тепĕртак кайсан Вăл Зеведей ывăлĕсене – Иаковпа унăн шăллĕне Иоана – курнă. Вĕсем те кимĕ çинче сĕреке-тетелĕсене
юсаса тăнă. [20] Çавăнтах Иисус вĕсене Хăй хыççăн пыракансем
пулма чĕннĕ. Вĕсем вара хăйсен ашшĕне Зеведея тарçисемпе
пĕрле кимĕ çинче хăварса Ун хыççăн кайнă.

*Усал сывлăша хăваласа кăларни*

(Лк. 4:31-37)

[21] Акă ĕнтĕ вĕсем Капернаум хулине çитнĕ. Унта Вăл пирвайхи шăмат кунах синагогăра вĕренте пуçланă. [22] Çынсем
Унăн вĕрентĕвĕнчен тĕлĕнмеллипех тĕлĕннĕ, мĕншĕн тесен Вăл

---

* 1:10 Хăш-пĕр авалхи ал çырусенче: «*Иисус шывран тухнă самантрах тӳпе уçăлса кайнине, Святой Сывлăш кăвакарчăн пек курăнса Хăйĕн çине аннине асăрханă*».

саккун вĕрентӳçисем пек мар, Турă хăват панă пек вĕрентнĕ.
23 Вĕсен синагогинче усал ернĕ пĕр çын пулнă, вăл кăшкăрса
янă: 24 «Эй, Назарет Иисусĕ! Санăн пирĕнпе мĕн ĕç пур ара?
Эсĕ пире пĕтерме килнĕ! Эсĕ камне эпĕ пĕлетĕп. Эсĕ – Туррăн
Святойĕ!» 25 «Чарăн! – çирĕппĕн хушнă Иисус. – Тух ун ăшĕн-
чен!» 26 Вара усал сывлăш çынна чĕтретсе пăрахса, хыттăн кăш-
кăрса ун ăшĕнчен тухнă. 27 Пурте хăраса-тĕлĕнсе кайса пĕр-пĕ-
ринчен çапла ыйтнă: «Мĕн пулчĕ ку? Мĕнле çĕнĕ вĕрентӳ ку?
Вăл усал сывлăшсене те Хăйĕн вăй-хăвачĕпе хушать, лешсем
Ăна пăхăнаççĕ». 28 Часах пĕтĕм Галилея тăрăхĕнче Ун çинчен
хыпар сарăлнă.

*Иисус нумай çынна чиртен сыватни*

(Мф. 8:14-17; Лк. 4:38-41)

29 Çавăн хыççăн тӳрех Иисус синагогăран тухнă та Иаковпа
тата Иоанпа пĕрле Симонпа Андрей килне пынă. 30 Симонăн ху-
нямăшĕ сив чирпе выртнă пулнă. Çийĕнчех ун пирки Иисуса
каласа панă. 31 Иисус ун патне пынă та аллинчен тытса çĕклесе
тăратнă. Хĕрарăмăн чирĕ çавăнтах иртсе кайнă, вара вăл вĕсене
хăналама пуçланă. 32 Хĕвел ансан, каç пуласпа, Иисус патне чир-
лисемпе усал ернисене пурне те иле-иле пынă. 33 Пĕтĕм хулипех
алăк умне пуçтаръннă. 34 Чылайăшне Вăл чир-чĕртен сыватнă,
усал сывлăшсене те нумай хăваласа кăларнă. Усалсене Вăл Хăй
Христос пулнине пĕлни çинчен калама чарнă.

*Иисус Галилейăра вĕрентни*

(Лк. 4:42-44)

35 Ирхине вара Иисус ирех тăрса тухнă та çын çук вырăна кĕл-
тума кайнă. 36 Çапах та Симон тата унпа пĕрле пулнисем Ун
хыççăн васканă. 37 «Сана пурте шыраççĕ», – тенĕ вĕсем Иисуса
тупсан. 38 «Манăн çывăхри ялсемпе хуласенче те ӳкĕтлесе вĕрен-
тмелле, атьăр унта каяр, мĕншĕн тесен Эпĕ тĕнчене вĕрентме
килнĕ», – тенĕ Иисус вĕсене. 39 Вара Вăл пĕтĕм Галилея тăрăх
çӳресе унти синагогăсенче ӳкĕтлесе вĕрентнĕ тата усал сывлăш-
сене хăваласа кăларнă.

*Иисус юхан-суранлă çынна сыватни*
(Мф. 8:1-4; Лк. 5:12-16)

[40] Пĕррехинче Ун патне юхан-суранлă çын пынă та чĕркуçлен-
се ларса Ăна йăлăннă: «Сыватас тесессĕн, Эсĕ мана сыватма
пултаратăнах». [41] Иисус, хĕрхенсе, аллине тăснă та ăна сĕртĕнсе
çапла каланă: «Чиртен тасатас тетĕп, сывал». [42] Çакна каласанах
ун çинчи юхан-суран пĕтнĕ, ӳчĕ тап-таса пулса тăнă. [43] Иисус ун
çине çирĕппĕн пăхнă та ăна çав самантрах кайма хушнă. [44] «Асту,
никама та ним те ан кала, – тенĕ ăна Иисус. – Хăвна священни-
ка кайса кăтарт та ху тасалнăшăн Моисей Турра кӳме хушнă
парнене кӳр. Çакă ху сывалнине пĕлтерни пулать те ĕнтĕ». [45] Ан-
чах та лешĕ, кайнă-кайманах, мĕн пулса иртни çинчен пурне те
пĕлтерсе, каласа çӳреме пуçланă. Иисусăн вара хулана куçкĕре-
тĕнех кĕресси пĕтнĕ, Вăл хула тулашĕнче, ялсăр вырăнсенче çӳ-
ренĕ. Ун патне халăх пур çĕртен те пырсах тăнă.

## 2-мĕш сыпăк

*Паралич çапнă çынна сыватни*
(Мф. 9:1-8; Лк. 5:17-26)

[1] Иисус каллех Капернаума пырсан темиçе кунранах Вăл кил-
не тавăрăнни çинчен хыпар сарăлнă. [2] Нумаях та вăхăт иртмен,
алăк патĕнче те вырăн юлмиех халăх пуçтарăннă. Иисус çынсене
Турă сăмахне вĕрентнĕ. [3] Çавăн чухне тăваттăн Ун патне паралич
çапнă çынна çĕклесе пынă. [4] Халăх йышлă пулнăран вĕсем Иисус
патне çывхарайман. Вара вĕсем, çурт виттине пĕр çĕртен сирсе,
паралич çапнă çынна выртнă вырăнĕпех Иисус тĕлне антарнă.
[5] Иисус вĕсен ĕненĕвне курса паралич çапнă çынна çапла кала-
нă: «Ачам, санăн çылăхусем каçарăнчĕç». [6] Çавăнта темиçе сак-
кун вĕрентӳçи ларнă, вĕсем хăйсен ăшĕнче шухăшланă: [7] «Ку мĕн
капла Турра хурлать? Пĕртен-пĕр Турăсăр пуçне çылăх каçарма
кам пултартăр?» [8] Иисус Хăйĕн чун-чĕмĕпе вĕсен ăшри шухăшĕ-
сене çав самантрах пĕлсе çапла каланă: «Мĕншĕн эсир хăвăр
ăшăрта апла шухăшлатăр? [9] Паралич çапнă çынна мĕн калама
çăмăлтарах? „Санăн çылăхусем каçарăнчĕç“ теме-и е: „Тăр, вы-
рăнна ил те утса çӳре“ теме? [10] Анчах та Этем Ывăлĕн çĕр çинче
çылăх каçарма та ирĕк пуррине сире пĕлтерессĕм килет». Çавна

пӗлтерес тесе Вӑл паралич ҫапнӑ ҫынна каланӑ: 11 «Сана калатӑп:
тӑр та сарнӑ вырӑнна илсе киле кай». 12 Лешӗ ҫав самантрах тӑнӑ
та, вырӑнне илсе, пурин умӗнчех тухса кайнӑ. Вара пурте шалтах
тӗлӗнсе тата Турра мухтаса: «Кунашкаллине эпир нихӑҫан та
курманччӗ», – тенӗ.

*Иисус Левие* чӗнни*

(Мф. 9:9-13; Лк. 5:27-32)

13 Иисус каллех тинӗс хӗррине кайнӑ. Пӗтӗм халӑх Ун тавра
пуҫтарӑннӑ, Вӑл халӑха вӗрентнӗ. 14 Иртсе пынӑ чухне Вӑл Ал-
фей ывӑлне Левие, налук пухмалли ҫуртра лараканскере, курнӑ.
«Ман хыҫӑмран пыракан пул», – тенӗ ӑна Иисус. Лешӗ тӑнӑ та
Ун хыҫӗнчен кайнӑ.

15 Пӗррехинче Иисуспа вӗренекенӗсем Левий килӗнче хӑна-
ланнӑ. Вӗсемпе пӗрле тата налук пухакансемпе ҫылӑхлӑ ҫынсем
те нумайӑн апатланнӑ, вӗсем Ун хыҫӗнчен яланах йышлӑн ҫӳ-
ренӗ. 16 Иисус налук пухакансемпе тата ҫылӑхлӑ ҫынсемпе пӗрле
апат ҫинине курсан фарисейсен саккун вӗрентӳҫисем Унӑн вӗ-
ренекенӗсене ҫапла каланӑ: «Епле-ха Вӑл налук пухакансемпе,
ҫылӑхлӑ ҫынсемпе пӗрле ӗҫсе ҫиет?» 17 Ҫакна илтсен Иисус вӗсе-
не: «Тухтӑр сыввисене мар, чирлисене кирлӗ. Эпӗ тӳрӗ пурӑна-
кансене мар, ҫылӑхлисене ӳкӗнме чӗнмешкӗн килнӗ», – тенӗ.

*Типӗ тытасси ҫинчен ыйтни*

(Мф. 9:14-17; Лк. 5:33-39)

18 Иоанн вӗренекенӗсемпе фарисейсен вӗренекенӗсем типӗ тыт-
нӑ. Вӗсем Иисус патне пынӑ та ҫапла каланӑ: «Иоанн вӗрене-
кенӗсем те, фарисейсен вӗренекенӗсем те типӗ тытаҫҫӗ, Санӑн
вӗренекенӳсем мӗншӗн типӗ тытмаҫҫӗ?» 19 Иисус вӗсене ҫапла
каланӑ: «Туй ачисем кӗрӳ каччӑ хӑйсемпе пӗрле чухне типӗ ты-
тӗҫ-и? Ҫук, кӗрӳ каччӑ хӑйсемпе чухне вӗсем типӗ тытма пулта-
раймӗҫ. 20 Акӑ кӗрӳ каччӑна вӗсенчен туртса илес кунсем ҫитӗҫ,
ҫав кунсенче вара вӗсем типӗ тытӗҫ.

21 Никам та кивӗ тумтир ҫине ҫӗнӗ пир саплӑк лартмасть. Апла
тусан ҫӗнӗ саплӑкӗ кивӗ пирне тӑпӑлтарса кӑларӗ, ҫӗтӗкӗ вара
татах пысӑкланӗ. 22 Тин тунӑ хӗрлӗ эрехе те кивӗ сӑран хутаҫа

---

* 2:13 *Левий* – Матфей апостолӑн еврейла ячӗ.

никам та тултармасть. Апла тусан ҫӗнӗ эрех кивӗ сăран хутаҫа
ҫурса ярӗ те, эрехӗ те юхса тухӗ, хутаҫӗ те сая кайӗ. Тин тунă
хӗрлӗ эрехе ҫӗнӗ сăран хутаҫа ямалла».

*Христос тата шăмат кун*
(Мф. 12:1-8; Лк. 6:1-5)

23 Пӗррехинче шăмат кун Иисусăн тырă пуссипе иртсе пымал-
ла пулнă. Унăн вӗренекенӗсем ҫула май пучахсене тата-тата ил-
нӗ. 24 Иисуса фарисейсем ҫапла каланă: «Пăх-ха, мӗн хăтланаççӗ
вӗсем шăмат кун?! Тума юраманнине тăваççӗ». 25 Иисус вӗсене
тавăрса каланă: «Пӗррехинче Давид хăй тата унпа пӗрле пул-
нисем выҫăпа аптăраса ҫитсен, вăл мӗн тунине нихăҫан та вула-
ман-им эсир? 26 Епле вăл, Авиафар аслă священникра ларнă
чухне, кӗлӗ ҫуртне кӗрсе Турра халалланă ҫăкăрсене ҫинӗ, ҫав
ҫăкăрсене хăйпе пӗрле пулнисене те панă. Вӗсене священник-
семсӗр пуҫне никамăн та ҫиме юраман вӗт-ха». 27 Унтан вӗсене
ҫапла каланă: «Этеме шăмат куншăн туман, шăмат куна этемшӗн
тунă; 28 ҫавăнпа та Этем Ывăлӗ – шăмат кун хуҫи те».

## 3-мӗш сыпăк

*Алли типнӗ ҫынна сыватни*
(Мф. 12:9-14; Лк. 6:6-11)

1 Иисус каллех синагогăна пынă; унта алли типнӗ ҫын пулнă.
2 Иисуса айăплама сăлтав тупас шутпа, ҫак ҫынна Вăл шăмат кун
сыватмӗ-и тесе, хăшӗ-пӗрисем Ăна сăнаса тăнă. 3 Иисус алли
типнӗ ҫынна ҫапла каланă: «Маларах тух-ха». 4 Лешсене вара ка-
ланă: «Шăмат кун ырă тумалла-и е усал тумалла? Чуна ҫăлмал-
ла-и е пӗтермелле?» Пӗри те хирӗç чӗнмен. 5 Иисус, вӗсем хытă
чунлă пулнăран кулянса, вӗсене ҫилӗллӗн пăхса ҫавăрăннă та
ҫав ҫынна каланă: «Аллуна тăс-ха». Лешӗ тăснă та, алли тӳрленсе
тепри пекех пулса тăнă. 6 Фарисейсем вара унтан тухсан тӳрех
Ирод майлă ҫынсен ушкăнӗпе пӗрле Иисуса епле вӗлерес-ши те-
се Ăна хирӗç кавар тунă.

*Тинӗс хӗрринче*

7-8 Иисус вара Хăйӗн вӗренекенӗсемпе тинӗс хӗррине кайнă.
Ун хыççăн Галилейăра, Иудейăра, Иерусалимра, Идумейăра тата

Иордан леш енче пурӑнакан темӗн чухлӗ халӑх пынӑ. Иисусӑн
ӗҫӗсем пирки сӑмах сарӑлнӑран унта Тирпа Сидон таврашӗнчи
ҫынсем те йышлӑн пуҫтарӑннӑ. 9-10 Иисус чылайӑшне сыватнӑ.
Ӑна сӗртӗнесчӗ тесе чирлисем Ун патне талпӑннӑ. Хӑй тавра ха-
лӑх кӗпӗрленсе тулнӑран Иисус вӗренекенӗсене Хӑй валли кимӗ
хатӗрлеме хушнӑ. 11 Иисуса курсан усал сывлӑшсем Ун умне ӳк-
се: «Эсӗ – Турӑ Ывӑлӗ!» – тесе кӑшкӑрнӑ. 12 Иисус вара вӗсене
Хӑй ҫинчен пӗлтерме хыттӑнах чарнӑ.

*Вун икӗ апостола суйласа илни*
(Мф. 10:1-4; Лк. 6:12-16)

13 Унтан Иисус ту ҫине улӑхнӑ та Хӑй чӗнес тенӗ вӗренекенӗ-
сене чӗннӗ; лешсем Ун патне пынӑ. 14-15 Вӗсенчен вун иккӗшне
Иисус Хӑйпе пӗрле пулмашкӑн, вӗрентме ямашкӑн, чиртен сы-
ватмашкӑн тата усалсене хӑваласа кӑлармашкӑн хӑват илччӗр те-
се суйласа лартнӑ. 16 Вӑл ҫаксене суйласа илнӗ: Симон – Иисус
ӑна Петр тесе ят панӑ; 17 Зеведей ывӑлӗсем Иаковпа унӑн шӑллӗ
Иоанн – Иисус вӗсене Воанергес тесе ят панӑ, ку «аслати ачи-
сем» тени пулать; 18 Андрей, Филипп, Варфоломей, Матфей,
Фома, Алфей ывӑлӗ Иаков, Фаддей, Симон Кананит 19 тата Иу-
да Искариот. Ҫакӑ вара Ӑна сутаканни пулнӑ.

*Усалсене Иисус мӗнле хӑватпа хӑваласа кӑларать?*
(Мф. 12:22-32; Лк. 11:14-23; 12:10)

20 Иисуспа вӗренекенӗсем пӗр ҫурта кӗнӗ. Каллех халӑх нумай
пуҫтарӑннӑ пирки вӗсен апат ҫиме те май пулман. 21 Иисусӑн
ӑс-пуҫӗ йӗркеллех мар тенине илтсен тӑванӗсем Ӑна илме пынӑ.
22 Унӑн ӑшӗнче – Веельзевул*, Иисус усал сывлӑшсене усалсен
пуҫлӑхӗн хӑвачӗпе хӑваласа кӑларать тесе калаҫнӑ Иерусалимран
пынӑ саккун вӗрентӳҫисем те. 23 Иисус вӗсене аяккарах чӗнсе
илнӗ те ытарлӑн ҫапла каланӑ: «Епле-ха шуйттан шуйттана хӑва-
ласа кӑлартӑр? 24 Хирӗҫсе-пайланса кайсан патшалӑх тытӑнса тӑ-
раймасть, 25 кил-йыш та хирӗҫсе-пайланса кайсан арканать.
26 Шуйттан та, хӑйпе хӑй хирӗҫсен, пайланса кайсан, тытӑнса тӑ-
раймасть; унӑн пӗтес вӑхӑчӗ ҫитнӗ пулать вара. 27 Вӑйлӑ ҫыннӑн
ҫуртне кӗрсен, малтанах вӑйлӑскерне ҫыхса пӑрахмасӑр, никам

* 3:22 *Веельзевул* – шуйттанӑн, усал сывлӑшсен пуҫлӑхӗн, пӗр ячӗ.

та унăн япалисене çаратаймĕ, çыхса пăрахсан тин унăн çуртне
çаратайĕ. [28] Чăн калатăп сире, этем ывăлĕсен кирек епле çылăхĕ-
сем те, кирек епле хурласа калаçнисем те каçаранĕç. [29] Анчах та
кам Святой Сывлăша хурлать, ăна ĕмĕрне те каçару пулмĕ. Çав
çын ĕмĕрлĕхех айăплă пулма тивĕçлĕ». [30] Унăн ăшĕнче усал сыв-
лăш ларать тенĕрен Вăл çапла каланă пулнă.

*Иисус Христос Амăшĕпе тăванĕсем*

(Мф. 12:46-50; Лк. 8:19-21)

[31] Иисусăн Амăшĕпе тăванĕсем Ун патне пынă та, хăйсем пӳр-
те кĕмен, Ăна чĕнсе тухма ыйтнă. [32] Иисус тавра халăх ларнă.
«Сана тулта Аннӳпе тăванусем чĕнеççĕ», – тенĕ Ăна çавăн чухне.
[33] «Кам Манăн Аннем? Камсем Манăн тăванăмсем?» – тавăрнă
вĕсене Иисус. [34] Унтан, Хăй тавра ларакансене пăхса çаврăнса,
çапла каланă: «Акă Манăн аннемпе тăванăмсем. [35] Мĕншĕн тесен
кам Турă ирĕкне пурнăçласа пурăнать, çав Манăн тăванăм та,
аннем те пулать».

## 4-мĕш сыпăк

*Акаçă çинчен каланă ытарлăх*

(Мф. 13:1-9; Лк. 8:4-8)

[1] Иисус каллех тинĕс хĕрринче вĕрентме пуçланă. Ун патне
темĕн чухлĕ халăх пухăннă, çавăнпа Унăн кимĕ çине ларма тив-
нĕ. Вăл тинĕс хĕрринчи кимĕ çинче пулнă, мĕн пур халăх вара
çыран хĕрринче тăнă. [2] Иисус вĕсене ытарлăн каласа нумай вĕ-
рентнĕ, вĕсене ӳкĕтлесе çапла каланă: [3] «Ĕнтĕ итлĕр. Пĕр акаçă
акана тухнă. [4] Хăйхи акнă чухне хăш пĕрчисем çул хĕррине ӳкнĕ,
кайăксем вĕçсе пынă та çав пĕрчĕсене сăхса пĕтернĕ. [5] Хăшĕ
чуллă, сахал тăпраллă çĕре ӳкнĕ, тăпри ăшăх пулнăран калча ча-
сах шăтса тухнă. [6] Анчах та хĕвел тухсанах ăна ĕнтсе янă, тымар
ярайман калча вара типсе ларнă. [7] Хăшĕ пиçенлĕ ырăна ӳкнĕ,
пиçен çитĕнсе кайнă та калчана пусса лартнă, вара калча пучах
кăларайман. [8] Хăшĕ тата пулăхлă çĕр çине ӳкнĕ те шăтса тухса
пучах кăларнă: пĕр пĕрчĕрен вăтăр пĕрчĕ, тепри утмăл пĕрчĕ, та-
та тепри çĕр пĕрчĕ пултарнă. [9] Илтме хăлха пурри илттĕр!» –
тенĕ Иисус вĕсене.

*Ытарлăн калани çинчен*
(Мф. 13:10-17; Лк. 8:9-10)

10 Халăх салансан, унта юлнă çынсем тата вун икĕ вĕренекенĕ
Унран ытарлăн калани çинчен ыйтнă. 11-12 Вара Иисус вĕсене çапла
калань: «Сире Турă Патшалăхĕн вăрттăнлăхĕсене пĕлме тивĕç панă.
Ыттисене вара, тивĕçлĕ маррисене, Эпĕ йăлтах ытарлăн калатăп, ĕн-
тĕ вĕсем куçĕпе пăхсан та курмаççĕ, хăлхипе илтсен те ăнланмаççĕ,
çавăнпа та, çылăхĕсене каçарттарас тесе, Турă енне çаврăнмаççĕ».

*Акаçă çинчен каланă ытарлăха ăнлантарни*
(Мф. 13:18-23; Лк. 8:11-15)

13 «Çак ытарлăха та ăнланмастăр-и? – тенĕ вĕсене Иисус. – Ыт-
тисене вара епле ăнланса илĕр? 14 Акаçă Турă сăмахĕ акать. 15 Çул
хĕррине ӳкни çакна пĕлтерет: хăш-пĕрисем вĕрентнĕ сăмаха ит-
леççĕ, анчах та илтсенех вĕсем патне шуйттан пырать те вĕсен
чун-чĕрине акнине вăрласа каять. 16 Çавнашкалах чуллă çĕре ӳкни
те Турă сăмахне илтсе ăна тӳрех хавасланса йышăнакансене пĕл-
терет, 17 анчах та вĕсем питĕ иккĕленчĕк, чун-чĕрисем тымарсăр.
Каярахпа, сăмахшăн хĕн кăтартма е хĕсĕрлеме тытăнсан, вĕсем тӳ-
рех ĕненӳрен пăрăнаççĕ. 18 Пиçенлĕ вырăна ӳкни те Турă сăмахне
илтекен çынсенех пĕлтерет, 19 анчах та ку тĕнчери хĕвĕшӳ, пуян-
лăх илĕртĕвĕпе ытти илĕртӳсем вĕсен чунне тулса сăмаха пусса
лартаççĕ те, сăмах вара тĕшĕсĕр пулать. 20 Пулăхлă çĕр çине ӳкни
Турă сăмахне илтсе çав сăмаха хапăл тăвакансене пĕлтерет, вĕсен
чĕринчи сăмах тĕшĕ кăларать. Çапла вара, пĕринчен вăтăр пĕрчĕ,
тепринчен утмăл пĕрчĕ, тата тепринчен çĕр пĕрчĕ пулать».

*Çутаткăçпа виçе çинчен каланă ытарлăх*
(Лк. 8:16-18)

21 Унтан Иисус вĕсене çапла каланă: «Çутаткăça чӳлмекпе хуп-
лама е кравать айне лартма илсе пыраççĕ-им? Ăна çутаткăç ларт-
малли çине вырнаçтармаççĕ-им? 22 Вăрттăнни те паллă пулатех,
пытарса хăварни те çиеле тухатех. 23 Илтме хăлха пурри илттĕр!»

24 Тата вĕсене каланă: «Ман сăмахăма тимлĕн итлĕр. Мĕнле ви-
çепе виçетĕр, хăвăра та çав виçепех виçсе парĕç. Сире, сăмахăма
итлекенсене, ытларах та хушса парĕç. 25 Камăн пур, ăна татах па-
рĕç. Камăн çук, унăнне пур пеккине те туртса илĕç».

*Вăрлăх çинчен каланă ытарлăх*

26 «Турă Патшалăхĕ çакăн евĕрлĕ, – тенĕ тата Иисус. – Çын
çĕре вăрлăх акать. 27 Кайран вăл каçсерен çывăрать, ирсерен тă-
рать. Çав хушăра вăрлăх шăтса ӳсет, хайхи çын ку епле пулнине
те пĕлмест. 28 Çĕр хăй тĕллĕнех çимĕç парать: малтан калча ӳсте-
рет, унтан пучах кăларттарать, кайран пучаха тултарать. 29 Пулса
çитнĕ пучах часрах çурла тыттарать, мĕншĕн тесен вырма вăхă-
чĕ çитнĕ».

*Сарă пăрăç вăрри çинчен каланă ытарлăх*
(Мф. 13:31-32; Лк. 13:18-19)

30 «Турă Патшалăхне тата мĕнпе танлаштарар-ши? Ăна мĕнле
ытарлăхпа сăнарлама май пур-ши? – тенĕ Иисус. 31 – Вăл – сарă
пăрăç вăрри евĕрлĕ теме пулать. Акнă чухне çав пĕрчĕ çĕр çин-
чи вăрăсенчен чи пĕчĕкки. 32 Аксассăн шăтса тухать те мĕн пур
пахча çимĕçсенчен те çӳллĕ пулать. Унăн парка турачĕсен сулхă-
нĕнче вара вĕçен кайăксем те йăва çавăрма пултараççĕ». 33 Çын-
сем тавçăрса илме пултарнă таран Иисус вĕсене Турă сăмахне
çакнашкал нумай ытарлăхпа вĕрентнĕ. 34 Çынсемпе Вăл ытарлă
кăна калаçнă, вĕренекенĕсене вара куçа-куçăн чухне пĕтĕмпех
ăнлантарса панă.

*Çил-тăвăла чарни*
(Мф. 8:23-27; Лк. 8:22-25)

35 Каç пулса килнĕ чухне Иисус вĕренекенĕсене каланă: «Ти-
нĕс тепĕр енне каçар-ха». 36 Вара вĕренекенĕсем, халăхпа сыв-
пуллашсан, Иисуса ларнă киммипех хăйсемпе пĕрле илсе кайнă.
Унтах ытти кимĕсем те пулнă. 37 Çавăн чухне вăйлă çил-тăвăл
тухнă, вара хум çапнипе кимме шыв тула пуçланă. 38 Иисус ким-
мĕн хыçалти пайĕнче пуçелĕк хурсах çывăрнă пулнă. Ăна вăратса
çапла каланă: «Вĕрентекен! Эпир пĕтсен те Сана пурпĕрех-им?»
39 Иисус тăнă та çиле чарăнма хушнă, тинĕсе: «Чарăн, ан шавла», –
тенĕ. Вара çил лăпланнă та, çанталăк шăпах пулнă. 40 «Мĕншĕн
эсир çав тери хăравçă? Нивушлĕ сирĕн ĕненĕвĕр çук?» – тенĕ
Иисус вĕсене. 41 Питĕ хăраса кайнипе вĕсем пĕр-пĕрне çапла ка-
ланă: «Кам-ши Ку? Ăна çил те, тинĕс те пăхăнать».

## 5-мӗш сыпӑк

*Усал ернӗ ҫынна сыватни*
(Мф. 8:28-34; Лк. 8:26-39)

1 Иисуспа вӗренекенӗсем тинӗс леш енчи Гадара ҫӗрне ҫитсе
чарӑннӑ. 2 Иисус кимӗ ҫинчен ансанах Ӑна ҫӗр хӑвӑлӗнчи тупӑк-
лӑхран тухнӑ усал ернӗ пӗр ҫын тӗл пулнӑ. 3 Вӑл ҫӗр хӑвӑлӗнчи
тупӑклӑхсенче пурӑннӑ, ӑна никам та сӑнчӑрласа та чарайман.
4 Ҫынсем темиҫе хут та унӑн алли-урине сӑнчӑрласа-тимӗрлесе
пӑхнӑ, анчах вӑл сӑнчӑрӗсене тата-тата пӑрахнӑ, тимӗрӗсене ват-
нӑ. Ӑна никам та лӑплантарма пултарайман. 5 Ҫав ҫын яланах,
кунӗн-ҫӗрӗн сӑртсем ҫинче тата ҫӗр хӑвӑлӗсенчи тупӑклӑхра
кӑшкӑрашса, хӑйне-хӑй чулпа ҫапса сусӑрлатса ҫӳренӗ. 6 Вӑл,
Иисуса инҫетренех асӑрхаса, Ун патне чупса пынӑ та чӗркуҫлен-
сех пуҫҫапнӑ. 7 «Эй, Ҫӳлти Турӑ Ывӑлӗ Иисус! – тесе хыттӑн
кӑшкӑрнӑ вӑл. – Санӑн манпа мӗн ӗҫ пур? Турӑ ячӗпе Сана тар-
хаслатӑп, ан асаплантар мана». 8 Мӗншӗн тесен Иисус ӑна: «Усал
сывлӑш, тух ҫак ҫын ӑшӗнчен», – тенӗ пулнӑ. 9 «Эсӗ мӗн ятлӑ?» –
тесе ыйтнӑ унран Иисус. «Эпир нумаййӑн, ҫавӑнпа та эпӗ „пул-
ккипех“ ятлӑ», – тенӗ Ӑна лешӗ. 10 Унтан хӑйсене ҫав тӑрӑхран
хӑваласа ан ятӑр тесе вӗсем Иисуса йӑлӑнсах тархасланӑ. 11 Ҫа-
вӑнтах, ту патӗнче, пӗр пысӑк сысна кӗтӗвӗ ҫӳренӗ. 12 Усалсем
пурте Иисуса: «Пире ҫав сыснасен ӑшне кӗме ярсам», – тесе
йӑлӑннӑ. 13 Иисус ҫавӑнтах вӗсене ирӗк панӑ. Вара усал сывлӑш-
сем, тухса, сыснасем ӑшне кӗнӗ. Унтан сысна кӗтӗвӗ чӑнкӑ
ҫырантан тинӗсе сикнӗ, пурте путса вилнӗ. Кӗтӳре икӗ пине
яхӑн сысна пулнӑ. 14 Сысна пӑхакансем вара хуланалла чупнӑ та
ҫавӑн ҫинчен хулара тата таврари ялсенче кала-кала кӑтартнӑ.
Халӑх мӗн пулнине курма тухнӑ. 15 Хайхисем Иисус патне пынӑ
та акӑ мӗн курнӑ: ҫав ҫын, пулккипе усал ернӗскер, тумланса лар-
нӑ та чипер ӑс-тӑнпах ларать. Ҫакна курсан вӗсем хӑрасах кайнӑ.
16 Куҫӑн курнисем вӗсене усал ернӗ ҫынпа мӗн пулса иртнине те,
сыснасем ҫинчен те каласа кӑтартнӑ. 17 Вара халӑх Иисуса хӑйсен
ҫӗрӗ-шывӗнчен кайма тархасла пуҫланӑ. 18 Иисус кимӗ ҫине лар-
нӑ чухне хайхи усал ернипе асапланнӑ ҫын хӑйне те пӗрле илме
йӑлӑннӑ. 19 Анчах та Иисус ӑна пӗрле илмен. «Эсӗ киле кай та
Хуҫа Турӑ хӑвӑншӑн мӗн тунине, епле хӗрхеннине тӑванусене

каласа кӑтарт», – тесе кӑна хушса хӑварнӑ. [20] Унтан ҫав ҫын
Вунхула ҫӗрне кайнӑ та Иисус ӑна мӗн туни ҫинчен каласа ҫӳ-
реме пуҫланӑ. Вара пурте тӗлӗннӗ.

*Иаир хӗрне чӗртни тата юн каякан хӗрарӑма сыватни*
(Мф. 9:18-26; Лк. 8:40-56)

[21] Иисус тинӗс леш енчен кимӗпе каялла таварӑннӑ. Хӑй патне
халӑх йышлӑ пухӑннӑран Вӑл пӗр вӑхӑт тинӗс хӗрринчех пулнӑ.
[22-23] Ҫавӑнта синагога пуҫлӑхӗсенчен пӗри, Иаир ятлӑскер, пынӑ.
Иисуса курсанах, Ун ури умне ӳксе, вӑл питӗ хытӑ тархасла пуҫ-
ланӑ: «Хӗрӗм вилесле выртать, пырсамччӗ, сывалса чӗрӗ юлтӑр
тесе ун ҫине аллуна хурсамччӗ». [24] Вара Иисус унпа пӗрле кайнӑ.
Ун хыҫҫӑн халӑх йышлӑн кӗпӗрленсе пынӑ. [25] Ҫавӑнта юн кай-
нипе вун икӗ ҫул асапланакан пӗр хӗрарӑм пулнӑ. [26] Вӑл тӗрлӗ
тухтӑрсем патне ҫӳресе нумай нуша курнӑ, пӗтӗм укҫи-тенкине
пӗтернӗ, анчах ним усси те пулман, унӑн сывлӑхӗ пушшех япӑх-
ланса пынӑ. [27-28] Ҫав хӗрарӑм Иисус ҫинчен илтсе пӗлнӗ. «Унӑн
тумтирне те пулин сӗртӗнсен сывалӑттӑм», – тесе шухӑшланӑ
вӑл. Вара хайхискер халӑх хушшипе хыҫалтан пынӑ та Унӑн
тумтирне сӗртӗннӗ. [29] Ҫавӑнтах хӗрарӑмӑн юн кайма пӑрахнӑ,
чир-чӗртен сывалнине вӑл пӗтӗм ӳт-пӗвӗпе туйса илнӗ. [30] Иисус,
Хӑйӗнчен хӑват тухнине чунӗпе ҫав самантрах сиссе, халӑха пӑх-
са ҫаврӑннӑ та: «Тумтирӗме кам сӗртӗнчӗ?» – тенӗ. [31] Вара вӗ-
ренекенӗсем Ӑна ҫапла каланӑ: «Хӑвӑн тавра халӑх кӗпӗрленнин-
не курса тӑнӑ ҫӗртех епле-ха Эсӗ: „Тумтирӗме кам сӗртӗнчӗ?“ –
тетӗн». [32] Анчах та Иисус, Хӑйне кам сӗртӗннине курас тесе,
ҫаплипех йӗри-тавралла пӑхкаланӑ. [33] Хӑранипе чӗтреме ернӗ
хӗрарӑм вара, хӑйпе мӗн пулса иртнине пӗлекенскер, Иисус
патне пынӑ та Ун умне ӳксе тӗрӗссине каласа панӑ. [34] «Хӗрӗм!
Ӗненӗвӳ ҫӑлчӗ сана. Канӑҫлӑ каях, чирӳнтен сывал!» – тенӗ вара
ӑна Иисус.

[35] Иисус ҫак сӑмахсене каланӑ вӑхӑтрах синагога пуҫлӑхӗн ки-
лӗнчен пынӑ та ҫапла каланӑ: «Хӗрӳ вилсе кайрӗ ӗнтӗ. Вӗренте-
кене мӗншӗн чӑрмантаратӑн тата?» [36] Анчах та Иисус, ҫак сӑмах-
сене илтсенех, синагога пуҫлӑхне: «Ан хӑра, ӗнен кӑна», – тенӗ.
[37] Вара Вӑл Петрпа Иаковсӑр пуҫне, Иаков шӑллӗ Иоансӑр пуҫне
Хӑй хыҫҫӑн никама та пыма хушман. [38] Иисус синагога пуҫлӑхӗн
килне ҫитнӗ те аптӑраса кайнӑ ҫынсене курнӑ, хӳхлесе хыттӑн

йёнине илтнĕ. [39] «Мĕншĕн каплах кулянса йĕретĕр? – тенĕ Вăл
пӳрте кĕрсенех. – Хĕр ача вилмен, çывăрать кăна». [40] Çынсем
Иисусран кулма пуçланă. Анчах та Вăл ыттисене пӳртрен тухма
хушнă та хĕрĕн ашшĕ-амăшĕпе тата Хăйпе пулнисемпе пĕрле хĕр
ача выртакан пӳлĕме кĕнĕ. [41] Унтан хĕр ачана аллинчен тытнă та:
«Талифа куми!» – тенĕ. Ку: «Хĕрĕм, сана калатăп, тăр!» – тени-
не пĕлтерет. [42] Хĕр ача – вăл ĕнтĕ вун икĕ çулсенче пулнă – вара
тӳрех тăнă та утма пуçланă. Çакна курсан пурте тĕлĕнмеллипех
тĕлĕннĕ. [43] Çак ĕç пирки никам та ан пĕлтĕр тесе Иисус вĕсене
çирĕппĕн каласах чарнă. Вара хĕре çимелли пама хушнă.

## 6-мĕш сыпăк

### *Назарет çыннисем Иисуса ĕненменни*

(Мф. 13:53-58; Лк. 4:16-30)

[1] Унтан Иисус çав вырăнтан Хăй ӳснĕ хулана таврăннă. Унпа
пĕрле вĕренекенĕсем те пынă. [2] Шăмат кун çитсен Вăл синагогă-
ра вĕрентме пуçланă. Итлекенсенчен чылайăшĕ тĕлĕннипе çапла
каланă: «Кунашкал пĕлӳ ăçтан тухать-ха Унăн? Мĕнлескер-ши
вăл, Ăна панă ăслăлăх? Çавнашкал хăватсене тума епле пулта-
рать-ши Вăл? [3] Платник çеç мар-им вара Вăл? Вăл Мария ывăлĕ,
Иаковпа Иосийăн, Иудăпа Симонăн тăванĕ кăна-иç! Унăн аппă-
шĕсем те кунтах, хамăр хушшăмăртах мар-им вара?» Çапла вĕ-
сем Унăн сăмахĕсене ĕненесшĕн пулман. [4] Иисус вара вĕсене ка-
ланă: «Хисеплемен пророк пулмасть, хисеп тумасан та ăна тăван
çĕр-шывĕнче тата тăван халăхĕ хушшинче, хăй килĕнче кăна хи-
сеп тумаççĕ». [5] Вăл унта нимĕнле хăват та кăтартман, хăш-пĕр
чирлĕ çынсене кăна аллине хурса сыватнă. [6] Вĕсен ĕненменлĕ-
хĕнчен Иисус питĕ тĕлĕннĕ. Унтан вара таврари ялсенче вĕрент-
се çӳренĕ.

### *Иисус вун икĕ апостолне вĕрентсе çӳреме ярать*

(Мф. 10:1, 5-15; Лк. 9:1-6)

[7] Иисус Вун иккĕшне чĕнсе илнĕ. Вара вĕсене, усал сывлăш-
сене пăхăнтарма хăват парса, икшерĕн-икшерĕн вĕрентме янă.
[8] Иисус вĕсене çул çине туясăр пуçне нимĕн те: хутаç та, çăкăр
та, вак укçа та – илме хушман, [9] чаплă пушмак тăхăнма та, те-
пĕр кĕпе илме те каламан. [10-11] «Сире хăш çуртра хапăл туса

йышӑнаҫҫӗ, ҫав ҫуртра вӑл вырӑнтан кайма вӑхӑтӑр ҫитичченех
пурӑнӑр, – тенӗ Иисус вӗсене. – Кам та пулин сире хапӑл ту-
масан, сӑмахӑра та итлемесен, унтан тухса кайнӑ чухне эсир,
вӗсене асӑрхаттарнине пӗлтерсе, пушмак ҫумӗнчи тусана та сил-
лесех хӑварӑр. Чӑн калатӑп сире: суд кунӗнче Содомпа Гоморра
хулисене ҫав хуларан ҫӑмӑлтарах пулӗ*». 12 Вӗсем вара кайнӑ та
ҫылӑхран ӳкӗнме вӗрентсе ҫӳренӗ; 13 нумай-нумай усал сывлӑш
хӑваласа кӑларнӑ, чылай чирлӗ ҫынна ҫу сӗрсе сыватнӑ.

*Шыва кӗртекен Иоанн вилӗмӗ*
(Мф. 14:1-12; Лк. 9:7-9)

14 Ҫав вӑхӑтра Иисус ячӗ тавраллах сарӑлнӑ. Ирод патша Ун
ҫинчен илтсен ҫапла каланӑ: «Ку – вилӗмрен чӗрӗлсе тӑнӑ Шы-
ва кӗртекен Иоанн, ҫавӑнпа вӑл хӑватсем кӑтартать те». 15 Хӑшӗ-
сем тата: «Вӑл Илия пророк», – тенӗ. «Вӑл авалхи пророксем
евӗрлӗ пророк», – тенӗ тата теприсем. 16 Ирод вара, ҫакнашкал
калаҫусене илтсен: «Ку ҫын – эпӗ пуҫне кастарнӑ Шыва кӗрте-
кен Иоанн, вӑл вилӗмрен чӗрӗлсе тӑнӑ», – тенӗ. 17-18 Ирод хӑйӗн
пиччӗшӗн Филипӑн арӑмне, Иродиадӑна, качча илнӗ пулнӑ. Ҫав
хӗрарӑма пула вӑл Иоана тыттарса тӗрмене хупса лартнӑ пулнӑ.
Мӗншӗн тесен Иоанн ӑна: «Санӑн инкӳпе пурӑнма юрамасть», –
тесе ӳпкеленӗ. 19 Иродиада вара, Иоана ҫилленсе, ӑна вӗлертте-
ресшӗн пулнӑ, анчах пултарайман, 20 мӗншӗн тесен Ирод Иоан-
ран хӑранӑ. Иоанн тӳрӗ, сӑваплӑ ҫын иккенне пӗлсе Ирод ӑна
кӳрентерме паман, хӑйӗн ӗҫӗсене те нумайӑшне Иоанн каланӑ
пек тунӑ, унӑн сӑмахӗсене кӑмӑлласах итленӗ. 21 Иродиадӑн кӗт-
нӗ кунӗ аранах ҫитнӗ. Ирод хӑйӗн ҫуралнӑ кунне уявлама улпут
таврашӗсене, пинпӳсене тата Галилейӑри ятлӑ-сумлӑ ҫынсене
чӗнсе ӗҫкӗ-ҫикӗ тунӑ. 22-23 Ҫавӑн чухне Иродиада хӗрӗ кӗнӗ те хӑ-
насене ташласа савӑнтарнӑ. Унӑн ташши Иродпа хӑнисене питӗ
килӗшсе кайнӑ. Ирод вара хӗре: «Манран мӗн ыйтассу килет,
ҫавна ыйт. Эпӗ сана кирек мӗн ыйтсан та парӑп, ҫур патшалӑ-
хӑма та пама хатӗр», – тесе тупа тунӑ. 24 Хӗр амӑшӗ патне тухнӑ
та: «Мӗн ыйтам-ши?» – тенӗ. «Шыва кӗртекен Иоанн пуҫне
ыйт», – тенӗ амӑшӗ. 25 Хӗрӗ ҫавӑнтах патша патне васкаса кӗнӗ.
«Шыва кӗртекен Иоанн пуҫне тирӗк ҫине хурса халех илсе килсе

* 6:10-11 Хӑш-пӗр авалхи ал ҫырусенче юлашки пуплев ҫук.

пар мана», – тенӗ вӑл. 26 Патша салхуланнӑ, анчах хӑнисем умӗн-
че тупа тунӑран мӗн ыйтнине пама пулнӑ. 27 Вара патша ҫав са-
мантрах, Иоанн пуҫне илсе килме хушса, пӗр салтакне тӗрмене
янӑ. 28 Салтакӗ тӗрмене кайнӑ та Иоанн пуҫне касса, тирӗк ҫине
хурса хӗр патне илсе пынӑ, лешӗ вара ӑна амӑшне панӑ. 29 Ҫавна
илтсен Иоанн вӗренекенӗсем пынӑ та унӑн ӳтне тупӑклӑха илсе
кайса пытарнӑ.

*Пилӗк пин ҫынна тӑрантарни*

(Мф. 14:13-21; Лк. 9:10-17; Ин. 6:1-14)

30 Апостолсем Иисус патӗнче пуҫтарӑннӑ, хӑйсем мӗн-мӗн ту-
нине, мӗн-мӗн вӗрентнине йӑлтах каласа панӑ. 31 Килен-каян
йышлӑ пулнӑран вӗсен апат ҫиме те май пулман, ҫавӑнпа Иисус
вӗсене ҫапла каланӑ: «Халӗ хамӑр кӑна ҫын ҫук вырӑна каяр та
кӑштах канар». 32 Вара вӗсем пӗр хӑйсем кӑна кимӗпе ҫын ҫук
вырӑна ишсе кайнӑ. 33 Ҫапах та вӗсем ишсе кайнине ҫынсем
асӑрханӑ, чылайӑшӗ вӗсене палласа илнӗ. Тӗрлӗ хуласенчен тух-
нӑ халӑх, васкаса, ҫав вырӑна маларах ҫитнӗ те Иисус патне пу-
хӑннӑ. 34 Ҫыран хӗррине тухсан Иисус унта ҫынсем нумай пул-
нине курнӑ. Вӑл ҫынсене хӗрхеннӗ, мӗншӗн тесен вӗсем кӗтӳҫӗ-
сӗр сурӑхсем пекех пулнӑ. Вара Иисус вӗсене чылай вӗрентнӗ.
35 Каҫ пулса килнӗрен вӗренекенӗсем Иисус патне пырса ҫапла
каланӑ: «Кунта ҫын пурӑнман вырӑн, ӗнтӗ каҫ та пулса килет.
36 Эсӗ ҫынсене таврари ялсене кайса хӑйсем валли ҫӑкӑр туян-
машкӑн ярсамччӗ, вӗсен ҫиме ҫук». 37 «Ҫимелли вӗсене эсир хӑ-
вӑр парӑр», – тавӑрнӑ Иисус. «Вӗсене ҫитерме пӗр ик ҫӗр дина-
рийлӗх ҫӑкӑр кирлӗ. Кайса туянмалла-и вара пирӗн?» – тенӗ
Ӑна. 38 «Кайса пӑхӑр-ха, сирӗн миҫе ҫӑкӑр пур?» – тенӗ Иисус
вӗсене. «Пилӗк ҫӑкӑрпа икӗ пулӑ», – тенӗ лешсем кайса пӗлнӗ
хыҫҫӑн. 39 Вара Иисус халӑха ушкӑнӑн-ушкӑнӑн ҫерем ҫине ларт-
ма хушнӑ. 40 Ҫынсем ушкӑнӑн-ушкӑнӑн ҫӗршерӗн, аллӑшарӑн
ларса тухнӑ. 41 Унтан Иисус пилӗк ҫӑкӑрпа икӗ пулла илсе ҫӳлел-
ле пӑхнӑ та Турра тав тунӑ. Ҫӑкӑрсене Вӑл халӑха валеҫмешкӗн
вӗренекенӗсене хуҫа-хуҫа панӑ; икӗ пуллине те ҫавнашкалах ва-
леҫнӗ. 42 Пурте ҫисе тӑраннӑ. 43 Унтан юлнӑ ҫӑкӑр татӑкӗсене, пу-
лӑ татӑкӗсене тата вун икӗ кунтӑк туллиех пухнӑ. 44 Ҫиекенсен-
чен арҫынсем кӑна пилӗк пине яхӑн пулнӑ.

*Иисус шыв çийĕпе утни*
(Мф. 14:22-33; Ин. 6:15-21)

45 Çавăн хыççăнах Иисус вĕренекенĕсене кимĕ çине ларма, Хă-
йĕнчен маларах тепĕр енне, Вифсаидăналла, кимĕпе ишсе каçма
хушнă. Хăй халăха ăсатма юлнă. 46 Халăхпа сывпуллашсан Иисус
ту çине кĕлтума кайнă. 47 Каçхине кимĕ тинĕс варрипе ишсе пы-
нă, Иисус вара пĕчченех çыран хĕрринче пулнă. 48 Вăл вĕренеке-
нĕсем кĕсменпе вăйран кайса çиле хирĕç ишнине курнă. Тул çу-
тăласпа вара, тинĕс çийĕпе утса, Иисус вĕсем патне пынă, иртсе
каясшăн та пулнă. 49 Вăл тинĕс çийĕпе утса пынине курсан вĕре-
некенĕсем, куçа мĕлке курăнать пулĕ тесе, хăранипе кăшкăрсах
янă. 50 Вăл пурин куçне те курăннăран вĕсен сехри хăпнă та.
Иисус вара çав самантрах сасă парса: «Хастар пулăр! Ку — Эпĕ,
ан хăрăр!» — тенĕ. 51 Вăл вĕсен кимми çине ларсанах çил чарăн-
нă. Вĕренекенĕсем тĕлĕнмеллипех тĕлĕннĕ. 52 Мĕншĕн тесен чу-
нĕсем уçăлса çитеймен пирки вĕсем çăкăрпа тунă хăвата та ăн-
ланса илеймен пулнă-ха.

*Геннисаретра чирлисене сыватни*
(Мф. 14:34-36)

53 Тинĕс урлă ишсе каçсан вĕсем Геннисарет çĕрне çитнĕ те
çыран хĕррине пырса чарăннă. 54-55 Кимĕ çинчен ансанах унти
çынсем Иисуса палласа илнĕ те йĕри-таврах Ун çинчен пĕлтерсе
çӳренĕ. Вара чирлисене вырăнĕ-мĕнĕпех Иисус çавăнта тенĕ çĕ-
ре илсе пыра пуçланă. 56 Яла-и, хулана-и — Иисус кирек ăçта
пырсан та — пур çĕрте те çынсем чирлисене уçă лаптăка илсе
тухса вырттарнă. Вара Иисусран тумтир аркине те пулин сĕртĕн-
терме йăлăннă. Ăна сĕртĕнекенсем пурте сывалнă.

## 7-мĕш сыпăк

*Ваттисен йăли-йĕркине тытса пырасси çинчен*
(Мф. 15:1-20)

1 Пĕррехинче Иисус патне фарисейсем тата Иерусалимран пы-
нă темиçе саккун вĕрентӳçи пухăннă. 2 Вĕсем Иисусăн хăш-пĕр
вĕренекенĕсем çуман, таса мар алăпах çăкăр çинине асăрханă
та вĕсене ӳпкеленĕ. 3 Кунта çакна каламалла: фарисейсем, пур

иудейсем пекех, ваттисен йӑлипе аллисене тӗплӗн ҫумасӑр ҫи-
меҫҫӗ. 4 Ҫавнашкалах пасартан тавӑрӑнсан та ҫӑвӑнас йӑлана
туса ирттермелле, вара тин ҫимелле. Вӗсен тата ытти нумай
йӑласене те тытса пымалла: савӑт-сапана та, сак-тенкеле те йӗр-
кене пӑхӑнса ҫумалла. 5 Унтан фарисейсемпе саккун вӗрентӳҫи-
сем Иисусран ыйтнӑ: «Мӗншӗн Санӑн вӗренекенӳсем ваттисен
йӑлине пӑхӑнмаҫҫӗ, ҫиес умӗн аллисене ҫумаҫҫӗ?» 6 Иисус вӗсене
ҫапла хуравланӑ: «Сирӗн ҫинчен, икӗ питлӗскерсем ҫинчен,
Исаия пророк Турӑ сӑмахӗсемпе аван ҫырса хӑварнӑ: „Ҫак ҫын-
сем чӗлхи-ҫӑварӗпе Мана хисеплеҫҫӗ, анчах чун-чӗрипе Манран
питӗ аякра. 7 Вӗсем этем шухӑшласа кӑларнӑ вӗрентӗве, йӑ-
ла-йӗркене вӗрентеҫҫӗ пулсан, вӗсем Мана пуҫҫапни усӑсӑр“.
8 Эсир те Турӑ хушнине пӑрахӑҫласа этем шухӑшласа кӑларнӑ йӑ-
ласене çеç – савӑт-сапа ҫӑвассине тата ҫавӑн евӗрлӗ ытти тем те
пӗре – тытса пыратӑр». 9 Иисус татах ҫапла каланӑ: «Эсир хӑвӑр
йӑлӑра тытса пырас тесе Турӑ хушнине пӑрахӑҫлани лайӑх-им?
10 Моисей ҫапла каланӑ пулнӑ-ҫке-ха: „Аҫу-аннӳне хисепле“ тата
„Ашшӗне е амӑшне усал сӑмах калакана вилӗм ҫиттӗр“. 11 Эсир
вара мӗне вӗрентетӗр? „Ҫын хӑй ашшӗне е амӑшне парассине
„корван“ (Турӑ валлилӗх) тесе уйӑрса хума пултарать“, – тетӗр
эсир. 12 Капла вӗренти вӑл ҫынна аҫушӑн е аннӳшӗн нимӗн ту-
масан та юрать тениех-ҫке. 13 Ҫавнашкал япаласем эсир урӑх та
нумай тӑватӑр. Ҫапла майпа эсир хӑвӑр кӑларнӑ йӑла-йӗркешӗн
Турӑ сӑмахне пӑрахӑҫлатӑр».

14 Унтан Иисус халӑха чӗнсе ҫапла каланӑ: «Пурте Мана итлӗр
те ӑнланса илӗр. 15 Ҫынна тулашран кӗрекенни нимӗн те ир-
сӗрлетме пултараймасть, ӑшран тухаканни ирсӗрлетет. 16 Илт-
ме хӑлха пурри илттӗр!*» 17 Иисус халӑхран уйӑрӑлса пӳрте кӗр-
сен вӗренекенӗсем Унран ҫак ытарлӑх мӗне пӗлтернине ыйтнӑ.
18 Иисус вӗсене ҫапла каланӑ: «Эсир те ҫав териех ӑнланусӑр-и?
Тулашран кӗрекенни нимӗн те ҫынна ирсӗрлетме пултарайман-
нине те ӑнланмастӑр-и? 19 Тулашран кӗрекенни ҫын чун-чӗрине
мар, вар-хырӑмне кӗрет те тулашах тухать». (Ҫапла майпа Иисус
мӗн пур апат-ҫимӗҫ таса пулнине пӗлтернӗ.) 20 «Ӑшран туха-
канни вара ҫынна Турӑ умӗнче ирсӗрлетет, – тенӗ Вӑл малал-
ла. 21-22 – Мӗншӗн тесен усал шухӑшсем пурте: мӑшӑра улталасси,

* 7:16 Хӑш-пӗр авалхи ал ҫырусенче ку сӑвӑ ҫук.

аскӑнланасси, ҫын вӗлерессим, вӑрласси, ҫӑткӑнланасси, хаяр-
ланасси, улталасси, чарак ҫукки, кӗвӗҫесси, Турра хурласси,
мӑнкӑмӑлланасси, ӑссӑрланасси – ҫын ӑшӗнчен, чун-чӗринчен
тухаҫҫӗ. 23 Ҫак пӗтӗм усаллӑх ӑшран тухать, ҫынна Турӑ умӗнче
ирсӗрлетет».

*Сирофиники хӗрарӑмӗн хӗрне сыватни*

(Мф. 15:21-28)

24 Унтан кайсан Иисус Тирпа Сидон ҫӗрне пынӑ та пӗр ҫурт-
ра чарӑнса тӑнӑ. Вӑл Хӑй унтине никама та пӗлтересшӗн пул-
ман, анчах ҫынсем пурпӗрех пӗлнӗ. 25 Хӗрне усал ернӗ пӗр хӗ-
рарӑм Иисус килни ҫинчен илтнӗ те, пырса, Ун ури умне ӳксе
пуҫҫапнӑ, 26 хӗрӗ ӑшӗнчи усала хӑваласа кӑларма тархасланӑ. Вӑл
хӑй урӑх халӑх хӗрарӑмӗ, Сирофиники ҫынни пулнӑ. 27 Анчах та
Иисус ӑна ҫапла каланӑ: «Малтан ачасене тӑрантармалла, мӗн-
шӗн тесен ачасем ҫиес ҫӑкӑра йытӑсене пӑрахса пани аван мар».
28 «Ҫапли ҫапла та-ха, Хуҫамӑр, – тавӑрнӑ Ӑна хӗрарӑм, – ан-
чах йытӑсем те ача-пӑча сӗтел айне ӳкернӗ тӗпренчӗксене ҫиеҫ-
ҫӗ-ҫке». 29 «Сӑмаху тӗрӗс пулчӗ, – тенӗ ӑна Иисус, – халӗ каях,
хӗрӳ ӑшӗнчи усал тухрӗ!» 30 Киле пырсан ҫак хӗрарӑм хӑйӗн хӗрӗ
вырӑн ҫинче выртнине курнӑ. Ун ӑшӗнчи усал тухнӑ иккен.

*Хӑлхасӑр, селӗп ҫынна сыватни*

31 Иисус Тирпа Сидон ҫӗрӗнчен Вунхула ҫӗрӗ витӗр каллех Га-
лилея тинӗсӗ хӗррине тухнӑ. 32 Ҫавӑнта Иисус патне хӑлхасӑр,
селӗп ҫынна илсе пынӑ та Ӑна ҫав ҫын ҫине аллине хума тархас-
ланӑ. 33 Иисус ӑна халӑхран уйӑрнӑ та, куҫа-куҫӑн юлсан, Хӑйӗн
пӳрнисене унӑн хӑлхи шӑтӑкӗсене чикнӗ. Унтан Вӑл сурнӑ та
унӑн чӗлхине сӗртӗннӗ. 34 Вара тӳпенелле пӑхса ассӑн сывласа
янӑ та ҫав ҫынна: «Еффафа», – тенӗ (ку вӑл «уҫӑл» тени пулать).
35 Ҫав самантрах унӑн хӑлхи уҫӑлнӑ, чӗлхи ҫыхланни те иртсе
кайнӑ, вӑл чип-чиперех калаҫа пуҫланӑ. 36 Иисус ҫынсене ҫак ӗҫ
пирки никама та калама хушман. Анчах чарнӑҫемӗн вӗсем ытла-
рах та ытларах калаҫса ҫӳренӗ. 37 «Вӑл мӗн туни пӗтӗмпех вырӑна
килет, – тенӗ вӗсем тӗлӗнмеллипех тӗлӗнсе, – хӑлхасӑррисем те
илтме тытӑнаҫҫӗ, чӗлхесӗррисем те калаҫма пуҫлаҫҫӗ».

## 8-мӗш сыпӑк

*Тӑватӑ пин ҫынна тӑрантарни*
(Мф. 15:32-39)

1 Ҫав кунсенче пӗрре Иисус патне питӗ нумай халӑх пуханнӑ.
Ҫимелли вӗсен нимӗн те пулман. Иисус Хӑйӗн вӗренекенӗсене
чӗнсе илсе ҫапла каланӑ: 2 «Ҫак халӑха Эпӗ шеллетӗп: ҫынсем
ӗнтӗ виҫӗ кун хушши Манпа пӗрле, ҫиме вӗсен нимӗн те ҫук.
3 Килӗсене выҫах ярсан, вӗсем ҫул ҫинче халран кайӗҫ, мӗншӗн
тесен хӑшӗ-пӗри питӗ инҫетрен килнӗ». 4 «Кунта, ҫын пурӑн-
ман вырӑнта, вӗсене тӑраниччен ҫитермелӗх кам ӑҫтан ҫӑкӑр
тупма пултарӗ?» – тавӑрнӑ Ӑна вӗренекенӗсем. 5 «Сирӗн миҫе ҫӑ-
кӑр пур?» – ыйтнӑ вӗсенчен Иисус. «Ҫиччӗ», – тенӗ вӗсем. 6 Ва-
ра Иисус халӑха ҫерем ҫине ларма хушнӑ. Унтан ҫав ҫичӗ ҫӑкӑра
илсе Турра тав тунӑ та халӑха валеҫме вӗренекенӗсене хуҫа-хуҫа
панӑ, лешсем вара валеҫнӗ. 7 Тата вӗсен кӑштах вӗтӗ пулӑ пулнӑ.
Турра тав тунӑ хыҫҫӑн Иисус пуллине те халӑха валеҫме хушнӑ.
8 Пурте ҫисе тӑраннӑ. Юлнӑ татӑкӗсене тата ҫичӗ карҫинкка пух-
нӑ. 9-10 Ҫиекеннисем тӑватӑ пине яхӑн пулнӑ. Халӑхпа сывпул-
лашсанах Вӑл вӗренекенӗсемпе кимӗ ҫине ларса Далмануфа ҫӗр-
не ишсе кайнӑ.

*Тӳперен хӑват кӑтартма ыйтни*
(Мф. 16:1-4)

11 Унта фарисейсем пынӑ та Иисуспа тавлашма пуҫланӑ. Вӗ-
сем, Ӑна илӗртсе тӗрӗслес тесе, тӳперен хӑват кӑтартма хистесех
ыйтнӑ. 12 Вара Вӑл ассӑн сывласа янӑ та ҫапла каланӑ: «Ҫак ӑру
мӗншӗн-ха хӑват кӑтартма хистесех ыйтать? Чӑн калатӑп сире:
ӑна нимӗнле хӑват та пулмӗ». 13 Вӗсенчен уйӑрӑлсан Иисус кал-
лех кимӗпе тинӗс тепӗр енне кайма тухнӑ.

*Фарисейсен кӑвас тӗпӗ ҫинчен*
(Мф. 16:5-12)

14 Вӗренекенӗсем хӑйсемпе пӗрле ҫӑкӑр илме маннӑ, кимӗ ҫин-
че вӗсен пурӗ те пӗр ҫӑкӑр анчах пулнӑ. 15 Иисус вӗсене хытарсах
каланӑ: «Асӑрханӑр, фарисейсен кӑвас тӗпӗнчен, Иродӑн кӑвас
тӗпӗнчен сыхланӑр». 16 «Вӑл пирӗн ҫӑкӑр ҫуккишӗн ҫапла калать

ёнтё», – тенё вёсем пёр-пёрин хушшинче. [17] Вара Иисус вёсем
мён çинчен калаçнине пёлсе çапла каланă: «Мёншён эсир хăвă-
рăн çăкăр çукки пирки калаçатăр? Халиччене ăнкарса, ăнланса
илейместёр-и? Халиччене ăс-тăнăрсем усăлса çитеймерёç-и?
[18] Куçлă пулин те – курмастăр-им? Хăлхаллă пулин те – илт-
местёр-им? Çакна астумастăр-им: [19] Эпё пилёк çăкăра пилёк
пин çынна хуçа-хуçа парсан, юлашки юлнă татăкёсене миçе
кунтăк туллиех пухрăр-ха эсир?» «Вун иккё», – тавăраççё Ăна.
[20] «Тата çичё çăкăра тăватă пин çынна валеçсе парсан, юлнă та-
тăкёсене миçе карçинкка тултартăр-ха?» «Çиччё», – теççё леш-
сем. [21] «Эппин мёншён-ха халиччене ăнланмастăр?» – тенё
вара Иисус.

*Вифсаидăра суккăра сыватни*

[22] Пёррехинче, вёсем Вифсаида витёр тухнă чухне, Ун патне
суккăра çавăтса пынă та Иисуса ăна сёртёнме йăлăннă. [23] Иисус
çав суккăр çынна ялтан çавăтса тухнă та унăн куçне сурчăкпа йё-
петсе шăлса, ун çине аллине хурса ыйтнă: «Мён те пулин кура-
тăн-и?» [24] Лешё пăхнă та çапла каланă: «Усăмсăр курăннă пирки
иртсе çÿрекен çынсем йывăç пек курăнаççё». [25] Иисус каллех
аллипе ун куçне сёртённё, пăхма каланă. Суккăр çын вара тÿр-
леннё, йăлтах витёр куракан пулнă. [26] Вара Иисус ăна киле ярса
çапла каланă: «Яла-мёне кёрсе ан тăр, ялта никама та каласа
ан кăтарт».

*Иисус кам пулнине Петр пёлтерни*
(Мф. 16:13-20; Лк. 9:18-21)

[27] Унтан Иисуспа вёренекенёсем Филипп Кесарийё таврашён-
чи ялсене кайнă. Çул çинче Иисус Хăйён вёренекенёсенчен:
«Çынсем Мана Кам вырăнне хураççё?» – тесе ыйтнă. [28] «Пёри-
сем – Шыва кёртекен Иоанн вырăнне, теприсем вара – Илия
вырăнне, хăшё-пёрисем тата – пёр-пёр урăх пророк вырăнне ху-
раççё», – тавăрнă вёренекенёсем. [29] «Эсир хăвăр вара Мана Кам
вырăнне хуратăр?» – ыйтнă вёсенчен Иисус. «Эсё – Турă Суйла-
са илни, Христос», – тавăрса каланă Ăна Петр. [30] Иисус вёсене
Хăй çинчен никама та калама хушман.

*Иисус Хăй вилсе чĕрĕлесси çинчен калани*
(Мф. 16:21-28; Лк. 9:22-27)

31 Унтан Иисус вĕренекенĕсене Этем Ывăлĕ нумай асап курас-
си çинчен, ятлă-сумлă çынсемпе аслă священниксем тата саккун
вĕрентӳçисем Хăйне йышăнас çукки çинчен кала пуçланă. Тата
Вăл Хăйне вĕлересси çинчен, виççĕмĕш кунне чĕрĕлсе тăрасси
çинчен те каласа панă. 32 Çак сăмахсене Вăл уççăнах каланă. Ан-
чах та Петр Ăна, аяккарах чĕнсе илсе, хирĕçлеме пуçланă. 33 Вара
Иисус вĕренекенĕсем çине çавăрăнса пăхнă та Петра пат татса
çапла каланă: «Кай Ман патăмран, шуйттан! Эсĕ Турра юрăхли
çинчен мар, этеме юрăхли çинчен шухăшлатăн!» 34 Унтан халăха
тата Хăйĕн вĕренекенĕсене чĕнсе илсе каланă: «Кам Ман хыççăн
пырас тет, çав хăй çинчен манса, хăйĕн асап хĕресне йăтса, Ман
хыççăн пытăр. 35 Мĕншĕн тесен хăйĕн пурăнăçне упраса хăварас
текен ăна çухатĕ. Хăйĕн пурăнăçне Мана тата Ырă Хыпара халал-
ласа çухатакан ăна упраса хăварĕ. 36 Çын, пĕтĕм тĕнчене хăй алли-
не илсен те, хăй чунне сиен тусан, ăна мĕн усси пулĕ? 37 Çын хăй
чунне мĕн хакпа илейĕ? 38 Кам çак пăсăк та çылăхлă ăру хушшин-
че Манран тата Ман сăмахăмсенчен вăтанать, Этем Ывăлĕ те Аш-
шĕ мухтавĕпе, святой ангелĕсемпе пĕрле килсен унран вăтанĕ».

**9-мĕш сыпăк**

1 «Чăн калатăп сире, – тенĕ унтан Иисус вĕсене, – çакăнта тă-
ракансенчен хăшĕ-пĕрисем Турă Патшалăхĕ хăватлăн килнине
хăйсем виличченех курĕç».

*Иисус Христос сăн-сăпачĕ улшăнни*
(Мф. 17:1-13; Лк. 9:28-36)

2 Пĕр ултă кун иртсен Иисус Петра, Иакова тата Иоана ытти-
сенчен уйăрăммăн Хăйпе пĕрле çӳллĕ ту çине илсе кайнă. Вара
Унăн сăн-сăпачĕ вĕсен умĕнчех улшăннă: 3 Унăн тумтирĕ юр пек
чăлт шуррăн çуталса тăнă, çĕр çинчи пĕр шуратакан та унашкал
шуратаймасть. 4 Сасартăк вĕсене Иисуспа калаçса тăракан Илия-
па Моисей курăннă. 5 Çавăн чухне Петр Иисуса каланă: «Равви!*

* 9:5 *Равви* – еврейсем тĕн вĕрентӳçисене çапла хисеплесе чĕннĕ.

Епле аван пире кунта. Атьăр виçĕ хӳшĕ тăвар: пĕрне – Сан
валли, теприне – Моисей валли, тата теприне – Илия валли».
6 Çакна вăл ним калама аптăранăран каланă, мĕншĕн тесен вĕ-
сем хăраса ӳкнĕ пулнă. 7 Сасартăк вĕсене пĕлĕт пырса хупăрла-
са илнĕ, пĕлĕт çинчен вара: «Çакă Манăн савнă Ывăлăм, Ăна
итлĕр!» – текен сасă илтĕннĕ. 8 Вĕренекенĕсем йĕри-тавралла
йăпăр-япăр пăхкаланă, анчах та Иисуссăр пуçне урăх никама
та курман.

9 Ту çинчен аннă чухне вара Иисус вĕсене мĕн курни çинчен
Этем Ывăлĕ вилĕмрен чĕрĕлсе тăриччен никама та калама хуш-
ман. 10 Вĕсем хушнине итленĕ: çын çине сăмах кăларман. Вилĕм-
рен чĕрĕлсе тăрасси тени мĕне пĕлтерет-ши тесе кăна пĕр-пĕ-
ринпе калаçнă. 11 «Мĕншĕн-ха саккун вĕрентӳçисем Христосран
маларах Илия килмелле теççĕ?» – ыйтнă Унран вĕренекенĕсем.
12 Иисус вĕсене çапла тавăрса каланă: «Малтан Илия килсе пур-
не те хатĕрлесе хумалла тени тĕрĕсех ĕнтĕ. Эппин мĕншĕн-ха
Этем Ывăлĕн нумай асап курмалла, мăшкăл тӳсмелле тесе те
çырнă? 13 Калатăп сире: Илия килнĕччĕ ĕнтĕ. Анчах та, Çырнин-
че каланă пекех, унпа çынсем хăйсем мĕн тăвас тенине турĕç».

*Усал сывлăш ернĕ ачана сыватни*

(Мф. 17:14-20; Лк. 9:37-43)

14 Унтан Иисус, ытти вĕренекенĕсем патне пырсан, вĕсем тав-
ра халăх йышлăн тăнине, саккун вĕрентӳçисем Хăйĕн вĕренеке-
нĕсемпе тавлашнине курнă. 15 Ăна асăрхасанах пĕтĕм халăх тĕ-
лĕнсе кайнă, çынсем Ун патне чупа-чупа пырса сывлăх суннă.
16 «Эсир вĕсемпе мĕн пирки тавлашатăр?» – тесе ыйтнă Вăл сак-
кун вĕрентӳçисенчен. 17 Халăх хушшинчен пĕри Ăна çапла ху-
равланă: «Вĕрентекен! Эпĕ Сан патна чĕлхесĕр тăвакан усал сыв-
лăш ернĕ ывăлăма илсе килтĕм. 18 Çав усал сывлăш ăна ăçта ярса
илет, çавăнта çĕре ӳкерет. Вара ывăлăм кăпăк кăларса, шăлне
шатăртаттарса выртать, шăнăр туртнипе хытсах каять. Çав усала
хăваласа кăларма эпĕ Санăн вĕренекенӳсенчен ыйтрăм, анчах
вĕсем пултараймарĕç». 19 Иисус вара ăна çапла тавăрса каланă:
«Эй, ĕненмен ăру! Тата хăçанччен Манăн сирĕнпе пулмалла-ши?
Хăçанччен Манăн сире тӳсмелле-ши? Ачине Ман патăма илсе
килĕр эппин». 20 Ăна Иисус патне илсе пынă. Усал сывлăш
Иисуса курнă-курманах ачана чĕтретсе пăрахнă та, вăл çĕре ӳксе,

кăпăк кăларса йăвалана пуçланă. [21]«Ывăлна капла пулни чылай-
ранпа-и?» – ыйтнă вара Иисус ачан ашшĕнчен. «Мĕн пĕчĕкре-
нех, – тенĕ лешĕ. [22]– Усал сывлăш ăна пĕтерес тесе вута та, шы-
ва та темиçе хут сиктерчĕ. Хĕрхенсем пире, мĕн те пулин тума
пултарсан, пулăшсам». [23]Иисус вара ăна çапла каланă: «Мĕн
чухлĕ те пулин ĕненетĕн пулсан, ĕненекеншĕн Турă пурне те
пултарттарать». [24]Ача ашшĕ, куççульленсе, çав самантрах: «Ĕне-
нетĕп, Хуçамăр! Ĕненсех çитерейместĕп пулсан, пулăшсам!» –
тесе кăшкăрса янă. [25]Иисус, халăх васкаса пуçтарăннине курса,
усал сывлăша чарса каланă: «Чĕлхесĕр-хăлхасăр тăвакан сывлăш,
сана хушатăп: тух ун ăшĕнчен, текех нихăçан та ун ăшне ан
кĕр!» [26]Вара усал сывлăш кăшкăрса ярса, ачана чĕтретсе пăрах-
са ун ăшĕнчен тухнă. Ача вилнĕ пек выртнине курсан: «Вилсе
кайрĕ», – тенĕ чылайăшĕ. [27]Анчах та Иисус ăна аллинчен тытса
тăратнă та, вăл тăнă. [28]Унтан, Иисус пӳрте кĕрсен, куçа-ку-
çăн юлнă вĕренекенĕсем Унран çапла ыйтнă: «Мĕншĕн эпир
усала хăваласа кăлараймарăмăр?» [29]«Усал-тĕсел таврашне кĕл-
тунипе тата типĕ тытнипе* çеç хăваласа кăларма пулать», – тенĕ
вара Иисус вĕсене.

### *Иисус Хăй вилсе чĕрĕлесси çинчен тепĕр хут калани*

(Мф. 17:22-23; Лк. 9:43-45)

[30]Иисуспа вĕренекенĕсем çав тăрăхран кайнă. Вĕсем Галилея
çĕрĕпе пынă. Хăйсем унта пулнине Иисус пĕлтересшĕн пулман.
[31]Иисус Хăйĕн вĕренекенĕсене: «Этем Ывăлне çынсен аллине
тытса парĕç, Ăна вĕлерĕç, вĕлерсен виççĕмĕш кунне Вăл чĕрĕлсе
тăрĕ», – тесе вĕрентсе каланă. [32]Анчах вĕсем çак сăмахсене ăн-
ланса илеймен, Хăйĕнчен ыйтма вара хăранă.

### *Кам аслăрах*

(Мф. 18:1-5; Лк. 9:46-48)

[33]Иисуспа вĕренекенĕсем Капернаума çитнĕ. Пĕр пӳрте кĕр-
сен Иисус вĕренекенĕсенчен ыйтнă: «Çул çинче эсир пĕр-пĕ-
ринпе мĕн çинчен калаçаттăрччĕ-ха?» [34]Вĕсем чĕнмен, мĕншĕн
тесен çул тăршшĕпех хăйсенчен хăшĕ аслăраххи пирки тавлашса
пынă пулнă. [35]Ларсан Вăл Вун иккĕшне Хăй патне чĕнсе илнĕ

---

* 9:29 Хăш-пĕр авалхи ал çырусенче «*тата типĕ тытнипе*» сăмахсем çук.

те çапла каланă: «Кам пуринчен те аслă пулас тет, çав пурин-
чен те кĕçĕн, пуриншĕн те тарçă пултăр». [36] Вара Вăл пĕр пĕчĕк
ачана вĕсен умне илсе пырса тăратнă. Унтан, ачана ыталаса, вĕ-
ренекенĕсене каланă: [37] «Кам çакнашкал ачасенчен пĕрне Ман
ятăмшăн хапăл тăвать, çав Мана йышăнать. Мана хапăл тăвакан-
ни Мана çеç мар, Мана кунта Яракана та йышăнать».

*Кам сире хирĕç мар, çав сире майлă*

(Лк. 9:49-50)

[38] «Вĕрентекен! — тенĕ çавăн чухне Иоанн. — Эпир Сан ятупа
усалсене хăваласа кăларакан пĕр çынна тĕл пултăмăр, анчах ха-
мăрпа пĕрле çӳременрен эпир ăна чартăмăр». [39] Иисус вара çапла
каланă: «Ан чарăр ăна: Ман ятăмпа хăват тăвакансенчен нихăшĕ
те Ман çинчен часах усал калаçас çук. [40] Кам сире хирĕç мар,
çав сире майлă». [41] «Чăн калатăп сире: кам сире Христос çынни-
сем тесе Ман ятăмпа пĕр курка шыв ĕçтерет, çав хăйĕн илес сă-
вапне çухатмĕ.

*Илĕртӳсем çинчен*

(Мф. 18:6-9; Лк. 17:1-2)

[42] Кам та кам çак Мана ĕненекен пĕчĕкскерсенчен пĕрне те
пулин илĕртсе çылăха кĕртет, çавăн мăйне арман чулĕ çакса
тинĕсе пăрахсан, ăна хăйне лайăхрах пулĕччĕ. [43] Сана аллу çылăх
тума илĕртет пулсан, ăна касса пăрах: икĕ аллупа тамăка, сӳнми
вута кĕриччен ĕмĕрлĕх пурăнăçа чăлаххăн кĕни саншăн лайăхрах.
[44] Унта, тамăкра, вĕсене çиекен хурчĕ те вилмест, çунтаракан ву-
чĕ те сӳнмест*. [45] Сана уру çылăх тума илĕртет пулсан, ăна касса
пăрах: икĕ урупа тамăка, сӳнми вута пăрахнинчен ĕмĕрлĕх пу-
рăнăçа уксаххăн кĕни саншăн лайăхрах. [46] Унта, тамăкра, вĕсене
çиекен хурчĕ те вилмест, çунтаракан вучĕ те сӳнмест. [47] Сана ку-
çу çылăх тума илĕртет пулсан, ăна чавса кăларса пăрах: икĕ куçу-
па тамăк вутне пăрахнинчен Турă Патшалăхне хăрах куçлăн кĕ-
ни саншăн лайăхрах. [48] Унта, тамăкра, вĕсене çиекен хурчĕ те
вилмест, çунтаракан вучĕ те сӳнмест. [49] Турра кӳмелли кирек еп-
ле выльăх-чĕрлĕхе те тăварпа тăварланă пекех кашниннех вутпа

---

* 9:44 44-мĕш, 46-мĕш, 48-мĕш сăвăсем вырăсла куçарусенче пĕрешкелех. Хăш-пĕр авалхи ал çырусенче 44-мĕшпе 46-мĕш сăвăсем çук.

тăварланмалла пулĕ. 50 Тăвар – ырă япала, анчах вăл хăватне çу-
хатсан унăн тутине эсир епле тавăрăр? Чун-чĕрĕрте ĕненӳ тăварĕ
пултăр, пĕр-пĕринпе килĕштерсе пурăнăр».

## 10-мĕш сыпăк

### *Уйăрăласси çинчен*
(Мф. 19:1-12)

1 Унтан кайсан Иисус Иордан леш енчи çĕрсем урлă Иудея тă-
рăхне пынă. Каллех Ун патне халăх пуçтараннă, каллех, яланхи
пекех, Вăл çынсене вĕрентнĕ. 2 Çавăнта Иисус патне фарисейсем
пынă та, Ăна илĕртсе тĕрĕслес тесе, çапла ыйтнă: «Упăшкин хăй
арăмне уйăрса яма юрать-и?» 3 «Моисей саккунĕ ун пирки мĕн
калать?» – тавăрнă вĕсене Иисус. 4 «Уйăрăлу хучĕ çырса парсан
уйăрălma Моисей ирĕк панă», – тенĕ вĕсем. 5 Вара Иисус вĕсене
çапла тавăрса каланă: «Моисей сире çав йĕркене чунăрсем уçăл-
са çитейменрен парса хăварнă. 6 Чăн малтанах вара, тĕнчене пул-
тарнă чухне, Турă çынсене арçын тата хĕрарăм пулмалла тунă.
7 Çавăнпа çын хăйĕн ашшĕ-амăшне хăварать те 8 арăмĕпе пĕрле-
шет. Вара иккĕшĕ пĕр ӳт пулаççĕ, ĕнтĕ вĕсем иккĕн мар, пĕр ӳт.
9 Çапла вара, Турă пĕрлештернине этем ан уйăртăр». 10 Каярах-
па пĕр килте Унăн вĕренекенĕсем каллех çавăн çинчен ыйтнă.
11 Иисус вĕсене çапла каланă: «Кам хăй арăмне уйăрса ярса урăх
арăм илет, çав малтанхи арăмне урăх хĕрарăмпа улталать. 12 Арă-
мĕ те упăшкинчен уйăрăлса урăххине качча кайсан мăшăрне ул-
талать».

### *Иисус ачасене пиллет*
(Мф. 19:13-15; Лк. 18:15-17)

13 Иисус аллипе сĕртĕнсе пиллетĕр тесе Ун патне ачасене илсе
пынă, анчах та вĕренекенĕсем ача-пăча илсе пыракансене Иису-
са кансĕрлеме чарнă. 14 Çавна курсан Иисус, çилленсе, вĕсене
каланă: «Ачасене Ман патăма ярăр, килме ан чарăр, мĕншĕн
тесен Турă Патшалăхĕ вĕсем пеккисемшĕн. 15 Чăн калатăп си-
ре: Турă Патшалăхне кам ача пек йышăнмасть, çав унта кĕрей-
мĕ». 16 Унтан Вăл ачасене ыталанă та вĕсем çине аллине хурса
пилленĕ.

*Иисуспа пĕр пуян çамрăк*
(Мф. 19:16-30; Лк. 18:18-30)

17 Иисус çула кайма тухнă чухне пĕр çын чупса пынă та Ун
умне чĕркуçленсе ларса Унран çапла ыйтнă: «Ырă Вĕрентекен!
Ĕмĕрлĕх пурăнăçлă пулас тесен манăн мĕн тумалла-ши?» 18 «Мĕн-
шĕн эсĕ Мана ырă тетĕн? – тавăрнă ăна Иисус. – Пĕр Турăсăр
пуçне никам та ырă мар. 19 „Мăшăрна ан ултала, çынна ан вĕлер,
ан вăрла, судра суйса ан пĕлтер, ĕçе тӳрĕ татса пар, аçу-аннӳне
хисепле“ текен пил-хушусене эсĕ пĕлетĕн». 20 «Вĕрентекен, – та-
вăрса каланă вăл, – эпĕ вăл пил-хушусене мĕн ачаранпах пăхăн-
са пурăнатăп». 21 Вара Иисус ăна тинкерсе пăхнă та ăшшăн кала-
нă: «Ĕнтĕ сана пĕр япала кăна çитеймест: кай та пĕтĕм пурлăхна
сутса чухăнсене валеçсе пар, вара сан валли пурлăх пĕлĕт çинче
пулĕ. Ху кил те, асап хĕресне йăтса, Ман хыççăн пыракан пул».
22 Çак сăмахсене илтсен вăл аптăраса кайнă та салхуллăн пăрăнса
утнă, мĕншĕн тесен вăл питĕ пуян пулнă.

23 Вара Иисус йĕри-тавралла пăхса илсе Хăйĕн вĕренекенĕсене
çапла каланă: «Пуян çынсене Турă Патшалăхне кĕмешкĕн епле
йывăр!» 24 Иисусăн çак сăмахĕсене илтсен вĕренекенĕсем тĕлĕнсе
хытсах кайнă. Анчах та Иисус вĕсене татах çапла каланă: «Ачам-
сем, пуянлăха шанакансене Турă Патшалăхне кĕмешкĕн епле
йывăр! 25 Пуяна Турă Патшалăхне кĕрессинчен тĕвене йĕп çăрти
витĕр тухма çăмăлрах». 26 «Эппин кам çăлăнма пултарĕ?» – шалт
аптăранипе пĕр-пĕринпе калаçнă вĕренекенĕсем. 27 Иисус вĕсем
çине тинкерсе пăхса çапла каланă: «Этем ăна тума пултараймĕ,
анчах та Турă тăваять, мĕншĕн тесен Турă пурне те пултарать».
28 Вара Петр Ăна кала пуçланă: «Акă эпир хамăрăн мĕн пурри-
не пĕтĕмпех хăвартăмăр та Сан хыççăн пыракансем пултăмăр».
29 «Чăн калатăп сире, – тенĕ Иисус, – кам та кам Маншăн тата
Ырă Хыпаршăн е кил-çуртне, е тăванĕсене, е ашшĕ-амăшне, е
арăмне, е ачисене, е ани-çаранне хăварать, çавă 30 халех, çак хĕ-
сĕрлев саманинчех кил-çуртне те, тăванне те, ашшĕ-амăшне те,
ачисене те, ани-çаранне те çĕр хут ытларах илĕ. Лери пурăнăçра
вара вăл ĕмĕрлĕх чĕрĕлĕхлĕ пулĕ. 31 Малтисем чылайăшĕ кайра
пулĕç, кайрисем малта пулĕç».

### *Иисус Хăй вилсе чĕрĕлесси çинчен виççĕмĕш хут калани*
(Мф. 20:17-19; Лк. 18:31-34)

32 Вĕсем Иерусалима каякан çулпа пынă. Сехĕрленсе ӳкнĕ вĕ-
ренекенĕсем умĕнче Иисус пынă, вĕсем хыççăн вара хăраса кай-
нă халăх утнă. Иисус Вун иккĕшне чĕнсе илсе вĕсене каллех
Хăйне мĕн кĕтнине кала пуçланă: 33 «Акă ĕнтĕ эпир Иерусали-
малла хăпарса пыратпăр, унта Этем Ывăлне аслă священниксем-
пе саккун вĕрентӳçисен аллине тытса парĕç. Вĕсем Ăна суд туса
вĕлерме йышăнĕç, унтан урăх халăх çыннисен аллине парĕç.
34 Лешĕсем Ăна мăшкăл кăтартĕç, чĕн пушăпа хĕнĕç, питрен сур-
са пĕтерĕç. Ăна вĕлерĕç, виççĕмĕш кунне Вăл чĕрĕлсе тăрĕ».

### *Иаковпа Иоанн ыйтни*
(Мф. 20:20-28)

35 Çавăн чухне Ун патне Зеведей ывăлĕсем Иаковпа Иоанн
пынă та çапла каланă: «Вĕрентекен! Эпир мĕн ыйтнине туса
парсамччĕ». 36 «Сирĕншĕн мĕн тумалла вара Манăн?» — ыйтнă
Иисус. 37 «Эсĕ Хăвăн чаплă Патшалăхунта пире пĕрне Хăвăн-
тан сылтăм енне, теприне сулахай енне лармалла тусамччĕ!» —
тенĕ вĕсем Ăна. 38 Анчах та Иисус вĕсене çапла тавăрнă: «Хăвăр
мĕн ыйтнине хăвăр та пĕлместĕр. Эпĕ ĕçес асап куркине ĕçме,
Эпĕ кĕрес асап шывĕпе тĕне кĕме пултарайăр-и эсир?» 39 «Пулта-
ратпăр», — тенĕ вĕсем. «Эпĕ ĕçес асап куркине сире те ĕçме лекĕ,
Эпĕ кĕрес асап шывĕпе сире те тĕне кĕме тивĕ. 40 Анчах Хамран
сылтăм е сулахай енне лартаканĕ Эпĕ мар. Турă кам валли ха-
тĕрленĕ, çавсем ларĕç». 41 Çакна илтсен тепĕр вунă вĕренекенĕ
Иаковпа Иоана тарăхса кайнă. 42 Иисус вара вĕренекенĕсене
чĕнсе илсе çапла каланă: «Халăхсен княçĕсем пулма тивĕçнисем
халăхпа хуçаланнине, пуçлăхсем те халăха пăхăнтарнине эсир
пĕлетĕр. 43 Анчах сирĕн хушшăрта апла пулмалла мар: хăвăр
хушшăрта асли пулас текенĕн ыттисемшĕн тарçă пулмалла. 44 Хă-
вăр хушшăрта малти пулас текенĕн ыттисемшĕн чура пулмалла.
45 Мĕншĕн тесен Этем Ывăлĕ те Хăйшĕн тăрăштарма килмен,
Хăй çынсемшĕн тăрăшас тесе, нумайăшне çăлмашкăн Хăй чунне
тӳлевлĕхе пама килнĕ».

*Суккăр Вартимее сыватни*
(Мф. 20:29-34; Лк. 18:35-43)

46 Вĕсем Иерихона çитнĕ. Иисуспа вĕренекенĕсем тата темĕн
чухлĕ халăх хуларан тухнă чухне пĕр суккăр çын, Тимей ывăлĕ
Вартимей, çул хĕрринче ыйткаласа ларнă. 47 «Иртсе пыракан-
ни – Иисус Назорей», – тенине илтсен Вартимей кăшкăрса ка-
ланă: «Давид йăхĕнчи Иисус! Хĕрхенсем мана!» 48 Нумайăшĕ ăна
шăпланма хушнă, анчах вăл тата хытăрах: «Давид йăхĕн Ывăлĕ!
Хĕрхенсем мана!» – тесе кăшкăрнă. 49 Иисус чарăннă та ăна чĕн-
се илме хушнă. Вара çынсем хайхи суккăра: «Ан хăра, тăр, Вăл
сана пыма хушать», – тенĕ. 50 Вартимей çиелти тумне хывса пă-
рахсах сиксе тăнă та Иисус патне пынă. 51 «Эсĕ Мана мĕншĕн
чĕнетĕн?» – тенĕ ăна Иисус. «Вĕрентекен! Манăн куракан пу-
ласчĕ», – тенĕ Ăна суккăр çын. 52 Иисус ăна çапла каланă: «Ĕнтĕ
каях, ĕненĕвӳ çăлчĕ сана». Вăл вара çав самантрах куракан пулнă
та çулпа Иисус хыççăн кайнă.

**11-мĕш сыпăк**

*Иисус Христос Иерусалим хулине кĕни*
(Мф. 21:1-11; Лк. 19:28-40; Ин. 12:12-19)

1 Иисуспа вĕренекенĕсем Иерусалималла çывхарса пынă. Ça-
вăн чухне, Елеон тăвĕ патĕнчи Виффагипе Вифани тĕлне çит-
сен, Иисус икĕ вĕренекенне 2 çапла хушса янă: «Çак хăвăр умăр-
ти яла кайăр, кĕнĕ-кĕменех унта эсир кăкарса хунă çамрăк
ашака асăрхăр, ун çине ку таранччен никам та утланса çӳремен.
Эсир ăна вĕçертсе çавăтса килĕр. 3 Кам та пулин сире: „Мĕн хăт-
ланатăр?“ – тесен, эсир çапла калăр: „Вăл Хуçамăра кирлĕ, Ху-
çамăр часах ăна каялла тавăрса парĕ“». 4 Вĕсем кайнă та урамра
хапха умне кăкарса хунă çамрăк ашака тупса, ăна вĕçертсе ил-
нĕ. 5 «Мĕн хăтланатăр? – тенĕ вĕсене çавăнта тăракансенчен хă-
шĕ-пĕрисем. – Ашака мĕншĕн вĕçертетĕр?» 6 Вĕсем Иисус хушнă
пек хуравланă та, çынсем вĕсене янă. 7 Унтан хайхи çамрăк аша-
ка Иисус патне çавăтса пынă, ашак çине хăйсен тумтирĕсене
хунă. Иисус вара ун çине утланса ларнă. 8 Темĕн чухлĕ халăх
хăйсен тумтирĕсене Иисус умне çул тăрăх сарса пынă, теприсем
тата йывăç турачĕсем касса çул тăрăх пăрахса пынă. 9 Умĕнче

пыракансем те, хыҫалта пыракансем те мухтаса ҫапла кăшкăр-
нă: «Осанна!* Хуҫа Турă ячĕпе Килекен мухтавлă! 10 Мăн асат-
темĕрĕн Давидăн Хуҫа Турă ячĕпе килекен Патшалăхĕ мухтав-
лă! Ҫӳл тӳпере те осанна!» 11 Иисус Иерусалима кĕрсен Турă
Ҫуртне пынă та пĕтĕмпех тĕплĕн пăхса ҫаврăннă. Вара тĕт-
тĕм пулса киличчен хуларан тухса Вун иккĕшĕпе пĕрле Вифа-
ние кайнă.

*Ҫимĕҫсĕр смоква йывăҫҫи*

(Мф. 21:18-19)

12 Тепĕр кунне, вĕсем Вифаниран тухсан, Иисусăн ҫиесси кил-
нĕ. 13 Вăл аякранах ешĕл ҫулҫăллă смоква йывăҫҫине асăрханă
та ун ҫинче ҫимĕҫ пур-ши тесе йывăҫ патне пынă. Анчах та пат-
нерех пырсан ун ҫинче ҫулҫăсăр пуҫне урăх ним те тупайман,
мĕншĕн тесен смоква ҫимĕҫне пухас вăхăт ҫитеймен пулнă-ха.
14 «Сан ҫинчен текех ĕмĕрне те никамăн та ҫимĕҫ татса ҫимелле
ан пултăр», – тенĕ вара Иисус йывăҫа. Ҫак сăмахсене вĕренеке-
нĕсем те илтнĕ.

*Иисус Турă Ҫуртĕнчи*
*сутуҫăсене хăваласа кăларни*

(Мф. 21:12-17; Лк. 19:45-48; Ин. 2:13-22)

15 Унтан вĕсем Иерусалима ҫитнĕ. Иисус Турă Ҫуртне кĕнĕ те
унта суту-илӳ тăвакансене хăваласа кăларма пуҫланă. Вăл укҫа
улăштаракансен сĕтелĕсене, кăвакарчăн сутакансен тенкелĕсене
тӳнтере-тӳнтере янă, 16 Турă Ҫурчĕ витĕр тĕрлĕ ăпăр-тапăр ҫĕкле-
се ҫӳреме чарнă. 17 Вĕсене вĕрентсе Вăл ҫапла каланă: «„Манăн
ҫуртăма пур халăхсемшĕн те лартнă кĕлĕ ҫурчĕ тесе калĕҫ“, – те-
мен-им Ҫырнинче? Эсир вара ăна вăрă-хурах йăви туса хунă».
18 Ҫак сăмахсене илтнĕ саккун вĕрентӳҫисемпе аслă священник-
сем Иисуса пĕтерме май шыранă. Пĕтĕм халăх Унăн вĕрентĕвĕн-
чен тĕлĕннĕ пирки вĕсем Иисусран хăранă. 19 Вара Вăл тĕттĕм
пулса киличчен хуларан тухса кайнă.

---

* 11:9 *Осанна* – еврейла «ҫăлсамччĕ» тенине пĕлтерет; ку сăмахпа мухтав сăмахĕ пек те усă курнă.

*Ёненессипе каçарасси çинчен*
(Мф. 21:20-22)

20 Ирхине иртсе пынă чух вĕсем хайхи смоква йывăççи тымарĕ
таранах типсе ларнине курнă. 21 Вара Петр, аса илсе, Иисуса ка-
ланă: «Равви! Пăх-ха, хайхи Эсĕ ылханнă смоква йывăççи типсе
ларнă». 22 Иисус вĕренекенĕсене çапла тавăрса каланă: 23 «Турра
ёненĕр! Чăн калатăп сире, кам çак тăва: „Вырăнунтан тапран та
тинĕсе кĕрсе ӳк“, — тесе чун-чĕрипе иккĕленмесĕр, хăй калани
пурнăçланасса ёненсе калать, вăл кирек мĕн калани те пулатех.
24 Çавăнпа калатăп сире: эсир кĕлтунă чухне мĕн ыйтатăр, çавна
парасса ёненĕр — вара илетĕрех. 25 Кама та пулин кӳреннĕ пул-
сан, кĕлĕ тунă чухне эсир ăна каçарăр. Вара Çӳлти Аçăр та сирĕн
çылăхăрсене каçарĕ. 26 Эсир каçармастăр пулсан, Çӳлти Аçăр та
сирĕн çылăхăрсене каçармĕ»*.

*Кам Сана çакнашкал ирĕк панă?*
(Мф. 21:23-27; Лк. 20:1-8)

27 Иисуспа вĕренекенĕсем каллех Иерусалима тавăраннă. Вăл
Турă Çуртĕнче çӳренĕ чухне Ун патне аслă священниксемпе
саккун вĕрентӳçисем тата ятлă-сумлă çынсем пынă. 28 «Эсĕ
çакна мĕнле тивĕçпе тăватăн? Кам Сана çакнашкал ирĕк па-
нă?» — тесе ыйтнă вĕсем. 29 Иисус вĕсене хирĕç çапла каланă:
«Манăн та сирĕнтен пĕр сăмах ыйтмалли пур. Эсир çавна ху-
равласан, эпĕ те сире çакна мĕнле тивĕçпе тунине пĕлтерĕп.
30 Калăр-ха Мана: Иоанн шыва кĕртни çӳлтен е этемрен пул-
нă?» 31 Лешсем вара пĕр-пĕринпе канашлама пуçланă: «Çӳл-
тен», — тесен, «Эсир Иоана мĕншĕн ёненмерĕр?» — тейĕ Вăл.
32 «Этемрен», — тесе вара вĕсем халăхран хăранипе калайман,
мĕншĕн тесен пурте Иоана чăн-чăн пророк тесе шутланă.
33 «Пĕлместпĕр», — тенĕ вара вĕсем Иисуса. «Эппин Эпĕ те
сире çакна мĕнле тивĕçпе тунине каламастăп», — тавăрнă вĕ-
сене Иисус.

---

* 11:26 Хăш-пĕр авалхи ал çырусенче ку сăвă çук.

## 12-мӗш сыпӑк

*Усал пахчаҫӑсем ҫинчен калану ытарлӑх*
(Мф. 21:33-46; Лк. 20:9-19)

1 Иисус вӗсене ытарлӑн калама пуҫланӑ: «Пӗр ҫын иҫӗм ҫырли
лартса пахча тунӑ, йӗри-тавра карта тытса ҫавӑрнӑ. Унтан вӑл
сӗткен пусса кӑлармалли юхтаркӑч чавнӑ тата хурал пӳрчӗ ларт-
нӑ. Вара пахчине тара панӑ та хӑй урӑх ҫӗре тухса кайнӑ. 2 Иҫӗм
ҫырли татма вӑхӑт ҫитсессӗн вӑл тарҫине пахчаҫӑсем патне ҫыр-
ла илме янӑ. 3 Анчах та лешсем тарҫӑна тытнӑ та хӗнесе тӑкса
пуш алӑпах янӑ. 4 Вара хуҫа вӗсем патне тепӗр тарҫине янӑ. Вӗ-
сем ӑна та пуҫне чулпа персе шӑтарса, мӑшкӑл туса янӑ. 5 Тата
тепӗр тарҫине янӑ та, пахчаҫӑсем ӑна вӗлернӗ. Ытти янӑ тарҫӑсе-
не те е хӗненӗ, е вӗлернӗ. 6 Ҫав хуҫан пӗртен-пӗр савнӑ ывӑлӗ
пулнӑ. „Ывӑлӑмран вӑтанӗҫех“, – тенӗ те вӑл юлашкинчен пах-
чаҫӑсем патне хайхи ывӑлне янӑ. 7 Анчах та пахчаҫӑсем, хуҫа
ывӑлне курсан, пӗр-пӗрне ҫапла каланӑ: „Ашшӗн пурлӑхӗ ҫакна
юлмалла, атьӑр ӑна вӗлерер те тивӗҫлӗ еткерне хамӑр илер“. 8 Ва-
ра вӗсем ӑна тытса вӗлернӗ те иҫӗм ҫырли пахчинчен кӑларса
пӑрахнӑ. 9 Ҫавӑн хыҫҫӑн пахча хуҫи мӗн тӑвӗ? Вӑл пырӗ те пах-
чаҫӑсене вӗлерттерӗ, пахчине урӑххисене парӗ. 10-11 „Ҫурт тӑва-
кансем пӑрахӑҫланӑ чул никӗсри тӗп чул пулса тӑчӗ; ҫакна Хуҫа-
мӑр турӗ, ҫакна эпир пӑхса ытараймастпӑр“, – тенӗ Ҫырнинче.
Эсир ҫавна та вуламан-им?» 12 Хайхи Иисуса илӗртсе тӗрӗсле-
кенсем ҫак ытарлӑха хӑйсем ҫинчен каланине ӑнланса илнӗ те
Ӑна ярса тытасшӑн пулнӑ, анчах та халӑхран хӑранӑ. Вара вӗсем
ҫавӑрӑнса утнӑ.

*Рим патшине тӳлемелли налук*
(Мф. 22:15-22; Лк. 20:20-26)

13 Унтан вӗсем, Иисус каланинче айӑпламалли сӑлтав тупасчӗ
тесе, Ун патне темиҫе фарисея тата Ирод майлисене янӑ. 14 Леш-
сем пынӑ та Ӑна ҫапла каланӑ: «Вӗрентекен! Эсӗ тӳрӗлӗхлӗ пул-
нине, никама та юрама тӑрӑшманнине эпир пӗлетпӗр. Эсӗ ҫын-
на кам пулнине кура хакламастӑн, чӑнах та Турӑ ҫулӗ ҫинчен
вӗрентетӗн. Эппин каласамччӗ: эпир Рим патшине налук тӳле-
ни тӗрӗс-и, тӗрӗс мар-и? Ҫав налука пирӗн памалла-и, памалла

мар-и?» 15 Анчах та Иисус, вӗсен чеелӗхне пӗлсе тӑрса, ҫапла
каланӑ: «Мӗн эсир Мана илӗртсе тӗрӗслетӗр? Мана пӗр дина-
рийлӗх укҫӑра илсе килсе кӑтартӑр-ха». 16 Лешсем илсе пынӑ.
Иисус вӗсене каланӑ: «Ҫакӑнта кам сӑнне ҫаптарнӑ, кам ятне
ҫырнӑ?» «Патшанне», – тенӗ Ӑна вӗсем. 17 Вара Иисус, вӗсе-
не хуравласа, ҫапла каланӑ: «Патшанне патшана парӑр, Тур-
ӑнне – Турра». Унӑн сӑмахӗсене илтсен вӗсем тӗлӗнмеллипех
тӗлӗннӗ.

*Вилнисем чӗрӗлсе тӑрасси ҫинчен ыйтни*

(Мф. 22:23-33; Лк. 20:27-40)

18 Унтан Иисус патне вилнисем чӗрӗлсе тӑрасса ӗненмен сад-
дукейсем пырса ыйтнӑ: 19 «Вӗрентекен! Моисей пирӗн валли
ҫапла ҫырса хӑварнӑ: „Камӑн та пулин ача-пӑчасӑр пиччӗшӗ
вилсен, арӑмӗ тӑлӑха юлсан, шӑллӗ унӑн арӑмне качча илтӗр,
пиччӗшӗн йӑхне тӑстӑр“. 20 Пӗр кил-йышра ҫичӗ пӗртӑванччӗ.
Асли авланчӗ те ача-пӑчасӑрах вилчӗ, 21 вара унӑн арӑмне иккӗ-
мӗшӗ илчӗ. Вӑл та ача-пӑчаллӑ пулаймасӑрах вилчӗ. Виҫҫӗмӗшӗ-
пе те ҫаплах пулчӗ. 22 Ҫав арӑма умлӑн-хыҫлӑн ҫиччӗшӗ те качча
илчӗҫ пулин те, ача-пӑча таврашӗ юлмарӗ. Пуринчен кайран
арӑмӗ те вилчӗ. 23 Ӗнтӗ вилнисем чӗрӗлсе тӑрас вӑхӑт ҫитсен
вӑл хӑшӗн арӑмӗ пулӗ-ши? Ҫиччӗшӗ те унпа пурӑннӑ-ҫке-ха».
24 Иисус вӗсене ҫапла хуравланӑ: «Эсир Ҫырнине те, Турӑ хӑ-
ватне те пӗлмесӗр ҫак тӗслӗхпех аташатӑр-и? 25 Вилнӗ ҫынсем,
чӗрӗлсе тӑрсан, авланмӗҫ те, качча та каймӗҫ, вӗсем тӳпери
ангелсем пек пулӗҫ. 26 Вилнисем чӗрӗлсе тӑрасси пирки вара
Моисей кӗнекинче каланӑ. Ҫунса тӑракан тӗмӗ ҫинчен каланӑ
тӗле вуламан-им эсир? Унта Турӑ ӑна: „Эпӗ – Авраам Турри те,
Исаак Турри те, Иаков Турри те“, – темен-им? 27 Турӑ вӑл вил-
нисен Турри мар, чӗррисен Турри. Ҫапла вара, эсир пит йӑнӑш
шухӑшлатӑр».

*Чи аслӑ пил-хушу*

(Мф. 22:34-40; Лк. 10:25-28)

28 Саккун вӗрентӳҫисенчен пӗри, вӗсем тавлашнине курса тӑр-
са, Иисус саддукейсене епле аван тавӑрса каланине илтсе, пат-
нерех пынӑ. «Чи аслӑ пил-хушу хӑшӗ?» – тесе ыйтнӑ вӑл Иисус-
ран. 29 Вара Иисус ҫапла хуравланӑ: «Малтанхи пил-хушу ҫакӑ:

„Эй, Израиль халăхĕ, итле! Пирĕн Хуçа Туррăмăр – пĕртен-пĕр
Хуçамăр. 30 Хуçа Турруна пĕтĕм чĕререн, пĕтĕм чунран, пĕтĕм
ăс-халтан, пĕтĕм вăй-халтан юрат“. Çакă – чи аслă пил-хушу!
31 Иккĕмĕшĕ те çавнашкалах аслă: „Çывăх çыннуна хăвна юратнă
пек юрат“. Çаксенчен аслăрах пил-хушу урăх çук», – тенĕ Вăл.
32 «Вĕрентекен! Эсĕ чаплă хурав патăн, – тенĕ вара Ăна саккун
вĕрентӳçи. – Турă пĕрре анчах, Унран урăххи çук тесе Эсĕ чăн-
нине каларăн. 33 Ăна пĕтĕм чĕререн, пĕтĕм ăс-халтан, пĕтĕм
чунран, пĕтĕм вăй-халтан юратмаллине те, çывăх çынна хăвна
юратнă пек юратмаллине те Эсĕ тĕрĕс каларăн. Çак пил-хушусе-
не тытса пыни кирек епле парнерен те – пĕтĕмĕшпе çунтарса
кӳнинчен те, ыттисенчен те – пахарах». 34 Саккун вĕрентӳçи ăслă
калаçнине кура Иисус ăна çапла каланă: «Эсĕ Турă Патшалă-
хĕнчен инçех те мар». Çавăнтан кайран никам та Ăна ыйтусем
пама хăяйман.

*Турă Суйласа илни кам йăхĕнчен пулмалла?*
(Мф. 22:41-46; Лк. 20:41-44)

35 Турă Çуртĕнче тата малалла вĕрентсе Иисус çапла каланă:
«Епле-ха саккун вĕрентӳçисем Турă Суйласа илни Давид йăхĕн-
чен пулмалла теççĕ? 36 Давид хăй те, Святой Сывлăш витĕмĕпе,
çапла каланă пулнă-çке: „Хуçамăр манăн Хуçама çапла каланă:
Эпĕ Санăн тăшманусене уру айне тăвиччен Эсĕ Манăн сылтăм
енче лар“. 37 Çапла вара, Давид хăй Ăна Хуçам тет. Эппин еп-
ле-ха Вăл унăн йăхĕнчен пулма пултарать?» Темĕн чухлĕ халăх
Ăна савăнса итлесе тăнă.

*Саккун вĕрентӳçисенчен асăрхаттарни*
(Мф. 23:1-36; Лк. 20:45-47)

38 Малалла Иисус çапла вĕрентсе каланă: «Саккун вĕрентӳ-
çисенчен асăрханăр. Вĕсем вăрăм тумтирпе саркаланса çӳреме
юратаççĕ, халăх йышлă çĕрте хăйсене саламланине килĕштереç-
çĕ. 39 Синагогăра вĕсем малта ларма, ĕçкĕ-çикĕре кĕрекере ларма
юратаççĕ. 40 Çавсене, тăлăх арăмсене кил-çуртсăр хăваракансене,
çын умĕнче юриех нумайччен кĕлтăвакансене, ыттисенчен те
йывăртарах айăплав пулĕ».

*Тăлăх арăмăн икĕ вак укçи*
(Лк. 21:1-4)

41 Иисус парне арчине хирĕç ларнă та çынсем унта укçа яни-
не сăнанă. Пуянсенчен чылайăшĕ нумай хунă. 42 Унтан пĕр чу-
хăн тăлăх хĕрарăм пынă та пĕр кодрант чухлĕ икĕ вак укçа хунă.
43 Вара Иисус Хăйĕн вĕренекенĕсене чĕнсе илсе çапла каланă:
«Чăн калатăп сире: çак чухăн тăлăх хĕрарăм укçа хуракансен-
чен пуринчен те ытларах хучĕ. 44 Мĕншĕн тесен пурте арчана ыт-
лашшине ячĕç, ку тăлăх хĕрарăм вара пур-çук юлашки укçине
хучĕ, хăйне пурăнмалăх укçине пĕтĕмпех арчана ячĕ».

## 13-мĕш сыпăк

*Турă Çуртне аркатасси çинчен*
(Мф. 24:1-2; Лк. 21:5-6)

1 Иисус Турă Çуртĕнчен тухнă чухне Ăна пĕр вĕренекенĕ çап-
ла каланă: «Вĕрентекен! Кур-ха, çурчĕсем те, вĕсене купаланă
чулĕсем те епле чаплă!» 2 Иисус ăна хирĕç каланă: «Куратăн-и
çак капмар çуртсене? Çакăнта чул çинче чул та юлмĕ, йăлтах
аркатĕç».
3 Тепĕртакран, Иисус Елеон тăвĕ çинче Турă Çурчĕ курăнакан
вырăнта ларнă чухне, Петрпа Иаков тата Иоанпа Андрей Унпа
куçа-куçăн юлсассăн çапла ыйтнă: 4 «Каласамччĕ пире: вăл хăçан
пулĕ? Çавсем пурте пуласса мĕнле паллă тăрăх пĕлмелле?» 5 Вĕ-
сене хуравласа вара Иисус çапла кала пуçланă: «Хăвăра кам та
пулин илĕртсе улталасран асăрханăр, 6 мĕншĕн тесен Ман ятăм-
па килекенсем нумай пулĕç. „Эпĕ – Христос“, – тесе вĕсем чы-
лайăшне улталĕç. 7 Вăрçăсем çинчен илтсен, вăрçă хыпарĕсем
илсен, хăраса ан ӳкĕр, мĕншĕн тесен çапла пулмалла та, анчах ку
пĕтес вăхăт мар-ха. 8 Халăх çине халăх тапăнĕ, патшалăх çине
патшалăх вăрçăпа тухĕ, тĕллĕн-тĕллĕн çĕр чĕтренĕ, выçлăх пуçла-
нĕ, халăх пăлханĕ. Çапах та ку – хĕн-хур пуçламăшĕ кăна-ха.
9 Эсир вара хăвăра хăвăр сыхланса пурăнăр! Сире суд тума тытса
парĕç, синагогăсенче хĕнĕç. Мана пула сире пуçлăхсемпе патша-
сем умне Ман çинчен çирĕплетсе пĕлтермешкĕн тăратĕç. 10 Ан-
чах та малтан пур халăхсем хушшинче те Ырă Хыпар сарăлса
çитмелле. 11 Сире суда тытса пама илсе кайнă чухне мĕн калас

тесе малтанах ан кулянăр, ан шухăшлăр. Çав самантра мĕн кала-
малли хăех тупăнĕ, мĕншĕн тесен калаканĕ эсир мар, Святой
Сывлăш пулĕ. 12 Тăванĕ – тăванне, ашшĕ ачисене вĕлерме тытса
парĕ. Ачи-пăчисем ашшĕ-амăшне хирĕç кайĕç, вĕсене вилĕм кӳ-
рĕç. 13 Ман ятăмшăн сире пурте курайми пулĕç. Кам вĕçне çи-
тичченех тӳсĕ, çав çăлăнĕ».

*Хăрушă асап-хуйхă çитесси çинчен*
(Мф. 24:15-28; Лк. 21:20-24)

14 «Даниил пророк калани çитсен, ирсĕр пулмалла мар вырăн
ирсĕрлĕхпе юхăнса тăнине курсан, – вулакан çакна ăнлантăр, –
Иудея халăхĕ тусем çине тартăр. 15 Кил хушшинчи çын япала
тавраш илес тесе пӳрте кĕрсе-туса ан тăтăр. 16 Хирти çын та
тумтир тавраш илес тесе каялла ан таврăнтăр. 17 Çав кунсенче
йывăр çын пулнă хĕрарăмсене, кăкăр çитерекен амăшĕсене пы-
сăк хуйхă пулĕ. 18 Тарса хăтăлас вăхăт хĕлле ан пултăрччĕ çеç тесе
кĕлтăвăр. 19 Мĕншĕн тесен ун чухне хăрушă асап-хуйхă пулĕ.
Унашкалли Турă пултарнă тĕнче пуçланнăранпа халиччен пул-
ман та, пулас та çук. 20 Хуçа Турă асап кунĕсен шутне чакар-
ман пулсан, никам та çăлăнса юлаяс çукчĕ. Анчах та Хăй суй-
ласа илнисене хĕрхенсе Вăл çав кунсен шутне чакарĕ. 21 Çавăн
чухне кам та пулин сире: „Христос акă кунта“ е: „Авă унта“, –
тесен, ан ĕненĕр. 22 Мĕншĕн тесен суя христоссемпе суя про-
роксем тупăнĕç. Вĕсем, тĕлĕнмелле паллăсемпе хăватсем кă-
тартса, май килсен суйласа илнисене те илĕртсе улталама пăхĕç.
23 Эсир вара сыхă пулăр. Çаксем пирки Эпĕ сире малтанах ка-
ласа хурас терĕм».

*Этем Ывăлĕ килесси çинчен*
(Мф. 24:29-31; Лк. 21:25-28)

24 «Çав кунсенче, асап хыççăн, хĕвел тĕттĕмленĕ, уйăх çути сӳ-
нĕ. 25 Тӳпери çăлтăрсем ӳкĕç, çӳлти вăй-хăватсем кисренсе кайĕç.
26 Унтан çынсем тӳпери пĕлĕтсем çинче аслăран та аслă хăватпа
тата мухтавпа килекен Этем Ывăлне курĕç. 27 Çавăн чухне Вăл
Хăйĕн ангелĕсене ярĕ, Хăй суйласа илнĕ çыннисене тĕнчен тă-
ватă енчен те, çĕр хĕрринчен пуçласа пĕлĕт хĕррине çитичченех
пуçтарĕ».

*Смоква йывăççипе танлаштарни*

(Мф. 24:32-35; Лк. 21:29-33)

28 «Илер-ха, тĕслĕхрен, смоква йывăççине. Унăн турачĕсем
папка кăларса ешере пуçласан эсир çу çывхарнине пĕлетĕр.
29 Çавнашкалах эсир те, Эпĕ калани пурнăçланса пынине кур-
сан, çак тĕнче пĕтес вăхăт çывхарнине, алăк умнех çитнине
пĕлсе тăрăр. 30 Чăн калатăп сире: çавсем пурте çак ăру пĕтич-
ченех пулса иртĕç. 31 Çĕрпе пĕлĕт те пĕтĕ, Ман сăмахăмсенчен
пĕри те пĕтмĕ».

*Сыхă пулма чĕнни*

(Мф. 24:36-44)

32 «Çавă хăш кун, хăш сехетре пуласса никам та пĕлмест, тӳ-
пери ангелсем те, Ывăлĕ те пĕлмест. Ăна пĕртен-пĕр Атте Турă
кăна пĕлет. 33 Астăвăр, сыхă пулăр, кĕлтăвăр, мĕншĕн тесен çав
вăхăт хăçан çитессе пĕлме пултараймастăр. 34 Ун чухне ак çак
ытарлăхра каланă пек пулĕ. Пĕр çын инçе çула кайма пуçта-
раннă. Килтен кайиччен вăл кашни тарçинех харпăр-хăй ĕçĕ-
шĕн яваплă пулма, хапха хуралçине сыхă пулма хушса хăварнă.
35 Çапла вара сыхă пулăр, мĕншĕн тесен кил хуçи те каçпа, те
çур çĕрте, те автан авăтсан, те ирхине килет. Эсир ăна пĕлме
пултараймастăр. 36 Астăвăр, вăл сасартăк эсир çывăрнă тĕле
килсе ан тухтăрччĕ. 37 Çакна сире кăна мар, пурне те калатăп:
сыхă пулăр».

**14-мĕш сыпăк**

*Иисуса хирĕç тунă кавар*

(Мф. 26:1-5; Лк. 22:1-2; Ин. 11:45-53)

1 Тата тепĕр икĕ кунтан пасха тата тутлăлла çăкăр уявĕ çитмел-
ле пулнă. Аслă священниксемпе саккун вĕрентӳçисем Иисуса
епле те пулин чеелĕхпе тытса вĕлерме май шыранă. 2 Анчах та
вĕсем çапла калаçса килĕшнĕ: «Иисуса уяв вăхăтĕнче тытас мар,
ахальлĕн халăх пăлханса кайĕ».

*Иисуса Вифанире çупа сĕрни*

(Мф. 26:6-13; Ин. 12:1-8)

3 Иисус Вифанире юхан-суранлă Симон патĕнче хăнара пул-
нă чухне çавăнта пĕр хĕрарăм кĕнĕ. Вăл алебастр савăтпа таса
та хаклă йышши нардран тунă ырă шăршăллă мирă илсе пынă.
Хĕрарăм, чул савăтне çапса уçса, Унăн пуçне çав çупа сĕре
пуçланă. 4 «Мĕне кирлĕччĕ мирăна пĕтерсе кунашкал тăкак-
ланни?» — тарăхса калаçнă хăш-пĕр хăнисем. 5 «Ăна виç çĕр
динарийрен те ытлараха сутса укçине чухăнсене пама пулат-
чĕ», — тесе ӳпкеленĕ вĕсем хĕрарăма. 6 Вара Иисус çапла кала-
нă: «Ан тивĕр ăна, мĕншĕн эсир хĕрарăма пăшăрхантаратăр?
Вăл Маншăн ырă ĕç турĕ. 7 Чухăнсем сирĕн яланах пулĕç, эсир
вĕсене хăçан ырă тăвас тетĕр, çавăн чухне пулăшма пултаратăр.
Эпĕ вара сирĕнпе яланах пулас çук. 8 Çак хĕрарăм хăй мĕн ту-
ма пултарнине турĕ: Ман ӳтĕме пытарма хатĕрлесе çу сĕрчĕ.
9 Чăн калатăп сире: çак Ырă Хыпара ăçта вĕрентĕç, çавăнта —
пĕтĕм тĕнчипех — ку хĕрарăма та аса илĕç, вăл мĕн туни çин-
чен те калаçĕç».

*Иуда Искариот сутăнчăклăхĕ*

(Мф. 26:14-16; Лк. 22:3-6)

10 Вун иккĕшĕнчен пĕри вара, Иуда Искариот, Иисуса аслă
священниксене тытса парас шухăшпа вĕсем патне кайнă.
11 Лешсем Иуда шухăшне пĕлсессĕн хĕпĕртесех ӳкнĕ, ăна кĕ-
мĕл укçа пама пулнă. Вара вăл Иисуса тытса пама меллĕ вăхăт
шыранă.

*Пасха апачĕ тума хатĕрленни*

(Мф. 26:17-25; Лк. 22:7-14, 21-23; Ин. 13:21-30)

12 Тутлăлла çăкăр уявĕн малтанхи кунĕнче, пасха валли пу-
тек пусмалли вăхăтра, вĕренекенĕсем Иисуса каланă: «Эсĕ пасха
апачĕ ăçта çиес тетĕн? Эпир кайса хатĕрлĕпĕр». 13 Вара Иисус
Хăйĕн икĕ вĕренекенне çапла каласа янă: «Хулана кайăр, унта
сире кăкшăмпа шыв çĕклесе пыракан пĕр çын тĕл пулĕ. Эсир
çав çын хыççăн кайăр. 14 Вăл кĕрекен çуртри кил хуçине çапла
калăр: „Вĕрентекен ака мĕн ыйтать: Эпĕ Хамăн вĕренекенĕм-
семпе пасха апачĕ çиес пӳлĕм хăшĕ?“ 15 Кил хуçи сире янтăласа

хунӑ пысӑк та хӑтлӑ пӳлӗм кӑтартӗ. Хамӑр валли пасха апачӗ
ҫавӑнта хатӗрлӗр». [16] Вӗренекенӗсем кайнӑ, хулана ҫитнӗ. Пӗ-
тӗмпех Иисус каланӑ пек пулса иртнӗ. Унтан вӗсем пасха апа-
чӗ хатӗрленӗ.

*Каҫхи вӑрттӑн апатлану*

(Мф. 26:26-30; Лк. 22:15-20; 1 Кор. 11:23-25)

[17] Каҫ пулсан Вун иккӗшӗпе пӗрле Иисус унта пынӑ. [18] «Чӑн
калатӑп сире, – тенӗ Иисус каҫхи апат ҫинӗ чухне, – сирӗнтен
пӗри, Манпа пӗрле ҫиекенскерех, Мана тытса парӗ». [19] Вӗре-
некенӗсем хуйха ӳкнӗ, вара пӗрин хыҫҫӑн тепри Ӑна: «Эпӗ
марах!» – теме пуҫланӑ. [20] «Вун иксӗртен пӗри, Манпа пӗрле
пӗр чашӑкран ҫӑкӑр пуҫса ҫиекенни, – тавӑрнӑ Иисус вӗсе-
не. [21] – Тепӗр тесен, Этем Ывӑлӗ Ҫырнинче палӑртса хунӑ ҫул-
па пырать. Анчах Этем Ывӑлне тытса паракана хуйхӑ пулӗ: ҫав
ҫынна ҫураличчен ҫуралманни лайӑхрах пулнӑ пулӗччӗ». [22] Каҫхи
апат ҫинӗ чухне Иисус ҫӑкӑра илсе Турра тав тунӑ та вӗренеке-
нӗсене хуҫа-хуҫа парса: «Илӗр, ҫиийӗр, ҫакӑ – Манӑн Ӳтӗм», –
тенӗ. [23] Унтан куркине илсе Турра тав тунӑ, вара ҫав куркаран
пурте ӗҫнӗ. [24] Иисус вӗсене ҫапла каланӑ: «Ҫак хӗрлӗ эрех – Ҫӗ-
нӗ Халала ҫирӗплетекен, нумай ҫыншӑн юхакан Манӑн Юнӑм.
[25] Чӑн калатӑп сире: ӗнтӗ Эпӗ иҫӗм ҫырли эрехне Турӑ Патша-
лӑхӗнче ҫӗнӗ эрех ӗҫес кунччен урӑх ӗҫеймӗп». [26] Вара, Турра
мухтаса юрланӑ хыҫҫӑн, Иисуспа вӗренекенӗсем Елеон тӑвӗ
ҫине кайнӑ.

*Петр тунасса Иисус малтанах калани*

(Мф. 26:31-35; Лк. 22:31-34; Ин. 13:36-38)

[27] Ҫавӑн чухне Иисус вӗсене каланӑ: «Кӗҫӗр эсир пурте Мана
шанма пӑрахатӑр, мӗншӗн тесен Ҫырнинче ҫапла каланӑ: „Кӗ-
тӳҫне пӗтерӗп те, сурӑхӗсем саланса кайӗҫ“. [28] Чӗрӗлсе тӑнӑ хыҫ-
ҫӑн вара Эпӗ Галилейӑра сирӗнтен те маларах пулӑп». [29] «Сана
пурте шанми пулсан та, эпӗ шанӑп», – тенӗ Ӑна Петр. [30] «Чӑн
калатӑп сана, – тенӗ вара ӑна Иисус, – кӗҫӗрех, автан иккӗ авӑт-
ма ӗлкӗриччене х, эсӗ Мана виҫӗ хутчен пӗлмӗш пулӑн». [31] «Сан-
па пӗрле вилмелле пулсассӑн та Санран тунас ҫук», – тенӗ Петр
ҫине тӑрсах. Ыттисем те ҫавнашкалах каланӑ.

*Елеон тӑвӗ ҫинче кӗлтуни*
(Мф. 26:36-46; Лк. 22:39-46)

32 Унтан вӗсем Гефсимани текен вырӑна пынӑ. «Эпӗ кайса кӗл-
тунӑ вӑхӑтра ҫакӑнтах ларӑр-ха», – тенӗ вӗренекенӗсене Иисус.
33 Вара Хӑйпе пӗрле Вӑл Петра тата Иаковпа Иоана илсе кайнӑ
та калама ҫук вӑйлӑн хуйхӑра пуҫланӑ. 34 «Манӑн чунӑм вилесле
хурланать, эсир ҫакӑнта Манпа пӗрле пулӑр-ха, ан ҫывӑрӑр», –
тенӗ вӗсене Иисус. 35-36 Вара кӑштах аяккалла пӑрӑннӑ та: «Май
пулсассӑн, ҫак асап вӑхӑчӗ Манран иртинччӗ. Эй, Авва* Аттем!
Эсӗ пурне те тума пултаратӑн. Ҫак асап куркине Манран ирт-
терсемччӗ. Ҫапах та Эпӗ тӑвас тенӗ пек мар, Эсӗ тӑвас тенӗ пек
пултӑр», – тесе ҫӗре ӳксе кӗлтунӑ. 37 Унтан вӗренекенӗсем патне
пынӑ та лешсем ҫывӑрнине курнӑ. «Симон, эсӗ ҫывӑратӑн-и? Пӗр
сехет те пулин ҫывӑрмасӑр тӳсеймерӗн-и? – тенӗ Петра. 38 – Илӗрт-
нипе ҫылӑха кӗрес марччӗ тесе, сыхӑ пулӑр, кӗлтӑвӑр: этемӗн
чун-чӗмӗ ҫирӗп, ӳт-пӗвӗ вара хавшак». 39 Унтан Иисус, каллех
пӑрӑнса, малтанхи пекех каласа кӗлтунӑ. 40 Вӗренекенӗсем патне
пырсан Вӑл лешсем каллех ҫывӑрнине курнӑ. Ыйхӑ пуссах ҫи-
тернипе вӗсем Иисуса ним тавӑрса калама та аптӑранӑ. 41 Унтан,
виҫҫӗмӗш хут кӗлтуса тавӑрӑнсан, Иисус вӗренекенӗсене ҫапла
каланӑ: «Эсир ҫаплах ҫывӑратӑр-и, канатӑр-и? Вӑхӑт ҫитрӗ ёнтӗ:
акӑ Этем Ывӑлне ҫылӑхлӑ ҫынсен аллине тытса параҫҫӗ. 42 Тӑрӑр
та каяр! Акӑ Мана сутакан та ҫывӑхрах».

*Иисуса тытни*
(Мф. 26:47-56; Лк. 22:47-53; Ин. 18:3-12)

43 Вӑл ҫапла каласа тӑнӑ вӑхӑтрах Вун иккӗшӗнчен пӗри, Иуда,
тата унпа пӗрле хӗҫсемпе шалҫасем йӑтнӑ темӗн чухлӗ халӑх
пырса ҫитнӗ. Вӗсене аслӑ священниксемпе саккун вӗрентӳҫисем
тата ятлӑ-сумлӑ ҫынсем янӑ пулнӑ. 44 Сутаканӗ вӗсемпе ҫапла
калаҫса татӑлнӑ пулнӑ: «Эпӗ Кама чуптӑвӑп, Ҫавӑ Иисус пулӗ.
Эсир Ӑна ярса тытӑр та хуралласа илсе кайӑр». 45 Вӑл ҫавӑнтах
Иисус патне пынӑ та: «Равви! Равви!» – тесе Ӑна чуптунӑ.
46 Лешсем вара, Ун ҫине алӑ ҫӗклеме хӑйса, Ӑна ярса тытнӑ.
47 Ҫав вӑхӑтра Иисуспа пулнисенчен пӗри хӗҫне туртса кӑларнӑ

---

* 14:35-36 *Авва* – еврейла «атте» тенине пӗлтерет.

та, аслă священник чури çине сулса ярса, унăн хăлхине касса
татнă. [48] Çавăн чухне Иисус Хăйне сырса илнисене каланă:
«Мана тытма эсир, вăрă-хураха хирĕç тухнă пек, хĕçсемпе, шал-
çасемпе тухрăр. [49] Эпĕ куллен Турă Çуртĕнче сирĕнпе пултăм,
вĕрентрĕм; ун чухне эсир Мана тĕкĕнмерĕр. Çырнинче мĕн ка-
лани пурнăçлантăр, тытăрах эппин». [50] Çавăн чухне Ăна пурте
пăрахса тарнă.

[51] Çара ӳчĕ çинченех пĕркенчĕк уртса янă пĕр темле çамрăк
çеç Иисус хыççăн утнă, анчах салтаксем ăна та ярса тытнă.
[52] Вара çав çамрăк, пĕркенчĕкне вĕсен аллинче хăварса, çара-
массăнах тарнă.

*Иисуса синедриона илсе пыни*

(Мф. 26:57-68; Лк. 22:54-55, 63-71; Ин. 18:13-14, 19-24)

[53] Иисуса чи аслă священник патне илсе кайнă. Вара çавăнта
ытти аслă священниксемпе ятлă-сумлă çынсем, саккун вĕрентӳ-
çисем пухăннă. [54] Петр вара аслă священник çурчĕ патне çитич-
ченех Иисус хыççăн чылай каярахра утса пынă. Картишне кĕр-
сессĕн вăл унти тарçăсемпе пĕрле кăвайт умне ăшăнма ларнă.
[55] Аслă священниксем тата синедрионра ларакан ытти çынсем,
Иисуса вĕлерттерес тесе, Ăна судра айăпламалли сăлтав шыранă,
анчах тупайман. [56] Ун çинчен нумайăшĕ суйса айăп кăтартнă, ан-
чах вĕсем кăтартнисем çителĕксĕр пулнă. [57] Хăшĕ-пĕрисем ура
çине тăрсах Ăна хирĕç çапла суйса пĕлтернĕ: [58] «„Этем аллипе
тунă çак Турă Çуртне аркатма, унтан тепĕр виçĕ кунран урăххи-
не, этем аллипе туманнине, çĕнĕрен туса лартма пултаратăп“, –
тенине эпир хамăр илтрĕмĕр». [59] Анчах вĕсем çапла кăтартни те
айăплама çителĕксĕр пулнă. [60] Вара аслă священник мала тухса
тăнă та Иисусран ыйтнă: «Вĕсем Сана хирĕç айăп кăтартаççĕ,
Санăн таварса каламалли нимĕн те çук-им?» [61] Иисус чĕнмен,
хирĕç таварса нимĕн те каламан. Аслă священник каллех ыйту
панă. «Эсĕ Христос-и? Мухтавлă Турă Ывăлĕ-и?» – тесе ыйтнă
Унран. [62] «Эпĕ, – тенĕ вара Иисус. – Ĕнтĕ эсир Этем Ывăлĕ, Хă-
ватлин сылтăм енче ларса, тӳпери пĕлĕтсем çинче килнине ку-
рăр». [63] Çакна илтсен, тарăхнипе, аслă священник хăй çийĕнчи
тумтирне çурса янă. «Унăн айăпне кăтартакан мĕн тума кирлĕ тата
пире? – тенĕ вăл. [64] – Вăл Турра хурланине хăвăрах илтрĕр! Ça-
кăн пирки эсир мĕн шухăшлатăр?» «Айăплă, вĕлермелле», – тенĕ

вара вӗсем пурте. 65 Хӑшӗ-пӗрисем Ун ҫине сура пуҫланӑ, Иису-
сӑн питне хупласа, ҫапа-ҫапа каланӑ: «Пророк пулсан кам ҫап-
нине кала!» Ӑна тарҫӑсем те питрен ҫупа-ҫупа янӑ.

*Петр Иисуса пӗлмӗш пулни*

(Мф. 26:69-75; Лк. 22:56-62; Ин. 18:15-18, 25-27)

66 Петр ҫав хушӑра тулта, картишӗнче ларнӑ. Аслӑ священни-
кӑн хӗрарӑм тарҫи, пырсан, 67 Петр кӑвайт умӗнче ӑшӑнса лар-
нине курнӑ. Вара ун ҫине тинкеререх пӑхса ҫапла каланӑ: «Эсӗ
те Назаретри Иисуспа пӗрлехчӗ». 68 Анчах та Петр, Иисусран
тунса: «Эсӗ мӗн калаҫнине пӗлместӗп те, ӑнланаймастӑп та», –
тенӗ. Вара малти картишне тухнӑ, ҫавӑнтах автан авӑтса янӑ.
69 Хӗрарӑм тарҫӑ ӑна каллех асӑрханӑ та ҫавӑнта тӑракансене: «Ку
ҫын ҫавсен ушкӑнӗнченех», – тесе кала пуҫланӑ. 70 Петр каллех
туннӑ. Тепӗртакран ҫавӑнта тӑракансем Петра татах ҫапла кала-
нӑ: «Эсӗ чӑнах та ҫавсен ушкӑнӗнченех. Мӗншӗн тесен эсӗ – Га-
лилея ҫынни, калаҫни-туни те вӗсен евӗрлех». 71 Вӑл вара пӗтӗм
чӗререн: «Эсир калакан Ҫынна эпӗ пӗлместӗпех», – тесе тупа
тӑва пуҫланӑ. 72 Ҫав самантрах автан иккӗмӗш хут авӑтса янӑ.
Петр вара хӑйне Иисус «автан иккӗ авӑтма ӗлкӗричченех эсӗ
Мана виҫӗ хутчен пӗлмӗш пулӑн» тенине аса илнӗ те йӗрсе янӑ.

## 15-мӗш сыпӑк

*Иисус Пилат патӗнче*

(Мф. 27:1-2, 11-14; Лк. 23:1-5; Ин. 18:28-38)

1 Ирхине, тул ҫутӑлсанах, аслӑ священниксем, ятлӑ-сумлӑ ҫын-
сем, саккун вӗрентӳҫисем – синедрионра ларакансем пурте ка-
нашласа йышӑннипе Иисуса ҫыхса Пилат патне илсе кайнӑ.
2 «Эсӗ Иудея Патши-и?» – тесе ыйтнӑ Унран Пилат. «Эсӗ ху
ҫапла каларӑн», – тавӑрнӑ ӑна Иисус. 3 Аслӑ священниксем Ӑна
хирӗҫ тем тӗрлӗ айӑплав та кӑларса тӑратнӑ. 4 Вара Пилат кал-
лех Унран ҫапла ыйтнӑ: «Куратӑн-и, Сана хирӗҫ мӗн чухлӗ айӑп-
лав сӑмахӗ калаҫҫӗ. Эсӗ мӗншӗн нимӗн те чӗнместӗн?» 5 Анчах
Иисус ҫакна хирӗҫ те нимӗн те тавӑрса каламан, ку вара Пилата
тӗлӗнтерсех янӑ.

*Иисуса вӗлерме ыйтни*
(Мф. 27:15-26; Лк. 23:13-25; Ин. 18:39–19:16)

[6] Кашни пасха уявӗ тӗлне вӑл тӗрмере ларакансенчен пӗрне
халӑх ыйтнипе ирӗке кӑларнӑ. [7] Ҫавӑн чухне пӗр Варавва ятлӑ
ҫын ытти пӑлхавҫӑсемпе пӗрле тӗрмере ларнӑ. Вӗсем пӑлхав вӑ-
хӑтӗнче ҫын вӗлернӗ пулнӑ. [8] Халӑх Пилатран йӑлана кӗнӗ йӗр-
кене пурнӑҫлама кӑшкӑра-кӑшкӑра ыйта пуҫланӑ. [9] Пилат вӗсене
ҫапла тавӑрса каланӑ: «Сире Иудея Патши текеннине кӑларса
парас мар-и? Килӗшетӗр-и?» [10] Аслӑ священниксем Иисуса ку-
раймасӑр тытса панине пӗлнӗрен Пилат ҫапла ыйтнӑ. [11] Анчах
аслӑ священниксем Иисус вырӑнне Вараввӑна кӑларма ыйтмаш-
кӑн халӑха пӑлхатса янӑ. [12] Пилат каллех вӗсене тавӑрса ҫапла ка-
ланӑ: «Хӑвӑр Иудея Патши текеннине манӑн мӗн тумалла вара?»
[13] Вӗсем каллех кӑшкӑра пуҫланӑ. «Пӑталаттар Ӑна!» — кӑшкӑрнӑ
вӗсем ҫаплах. [14] «Мӗн усалли тунӑ вара Вӑл?» — тенӗ Пилат вӗ-
сене. Анчах та халӑх тата хытӑрах: «Пӑталаттар Ӑна!» — тесе кӑш-
кӑрнӑ. [15] Вара Пилат, халӑх кӑмӑлне юрас тесе, Вараввӑна тӗрме-
рен кӑларттарнӑ, Иисуса, чӗн пушӑпа хӗнеттерсе, пӑталама хушнӑ.

*Иисусран мӑшкӑлласа кулни*
(Мф. 27:27-31; Ин. 19:2-3)

[16] Салтаксем Ӑна претори* картишне илсе кӗртнӗ те унта пул-
ккипех ытти салтаксене пухнӑ. [17] Вара Ӑна патшалла хӗрлӗ тум
тӑхӑнтартнӑ, Ун пуҫне йӗплӗ кӑ̆кен хуллинчен явнӑ пуҫ кӑшӑлӗ
тӑхӑнтартнӑ. [18] Вара Ӑна хисепленҫи пулса: «Сывӑ пултӑр Иудея
Патши!» — тесе саламлама пуҫланӑ. [19] Салтаксем Иисус ҫине су-
ра-сура Ӑна пуҫӗнчен туяпа ҫапса пӗтернӗ, Ун умне чӗркуҫленсе
ларса пуҫ тайнӑ пек хӑтланнӑ. [20] Унтан, мӑшкӑлласа тӑрансан,
Ун ҫийӗнчи хӗрлӗ тумне хывса илнӗ те Хӑйӗн тумтирне тӑхӑн-
тартнӑ. Вара Ӑна пӑталама илсе кайнӑ.

*Иисус Христоса пӑталани*
(Мф. 27:32-44; Лк. 23:26-43; Ин. 19:17-27)

[21] Ҫул ҫинче вӗсем хиртен тавӑрӑнакан Симон ятлӑ Киринея
ҫыннине, Александрпа Руф ашшӗне, тӗл пулнӑ, Иисусӑн хӗресне

---

* 15:16 *Претори* — Рим лартнӑ пуҫлӑхӑн пурӑнмалли тата ӗҫлемелли вырӑнӗ.

йӑтса пыма ҫавна хушнӑ. [22] Иисуса Голгофа ятлӑ вырӑна илсе
пынӑ, ку «Пуҫ купташки» тенине пӗлтерет. [23] Вара Ӑна смирнӑ-
па хутӑштарнӑ хӗрлӗ эрех ӗҫтересшӗн пулнӑ, анчах Вӑл ӗҫмен.
[24] Иисуса пӑталакансем Унӑн тумтирне шӑпа ярса пӗр-пӗрин
хушшинче валеҫнӗ. [25] Ирхине тӑхӑр сехетре Иисуса хӗрес ҫумне
пӑталанӑ. [26] Унӑн айӑпне кӑтартса «Иудея Патши» тесе ҫырса
ҫапнӑ. [27] Унпа пӗрле икӗ хураха пӑталанӑ: пӗрне – унран сылтӑм
енне, теприне – сулахай енне. [28] Ҫапла «Ӑна вӑрӑ-хурах шутне
кӗртӗҫ» тесе Ҫырнинче калани пурнӑҫланнӑ*. [29] Иртен-ҫӳренсем
Ӑна хурласа, пуҫӗсене сулла-сулла ҫапла калаҫкаланӑ: «Ай-яй,
Турӑ Ҫуртне аркатакан, ӑна виҫӗ кун хушшинче ҫӗнӗрен туса
лартакан! [30] Халӗ Хӑвна Ху ҫӑлсам, хӗрес ҫинчен анса пӑх-ха!»
[31] Аслӑ священниксемпе саккун вӗрентӳҫисем те ҫавнашкалах Ун-
ран мӑшкӑлланӑ. Пӗр-пӗрин хушшинче ҫапла калаҫкаланӑ: «Ыт-
тисене ҫӑлатчӗ, Хӑйне Хӑй ҫӑлаймасть! [32] Ӗнтӗ Христос, Израиль
Патши текенскер, халӗ хӗрес ҫинчен антӑр, эпир ҫакна курӑпӑр
та вара Ӑна ӗненме пуҫлӑпӑр». Хӑйӗнпе пӗрле пӑталанисем те
Унран йӗкӗлтесе кулнӑ.

### *Иисус Христос вилӗмӗ*

(Мф. 27:45-56; Лк. 23:44-49; Ин. 19:28-30)

[33] Кӑнтӑрла, вун икӗ сехетрен пуҫласа виҫӗ сехетчен, сасартӑк
пӗтӗм ҫӗр ҫинче сӗм тӗттӗм пулса ларнӑ. [34] Виҫӗ сехетре вара
Иисус хыттӑн кӑшкӑрса янӑ: «Элои! Элои! Ламма савахфани?»
Ку «Эй, Турӑҫӑм! Турӑҫӑм! Мӗншӗн Эсӗ Мана пӑрахрӑн?» тени
пулать. [35] Ҫакна илтсен: «Вӑл Илияна пулӑшма чӗнет», – тенӗ
ҫавӑнта тӑракансенчен хӑшӗ-пӗри. [36] Пӗри тата чупса кайнӑ та,
хӗрхӳлентернӗ хӗрлӗ эрех сӑхтарнӑ мунчалана патак вӗҫне тирсе,
Иисуса ӗҫме панӑ. «Тӑхтӑр-ха, пӑхса тӑрар: Илия Ӑна хӗрес
ҫинчен антарма килет-и?» – тенӗ ҫавскер. [37] Унтан Иисус хыт-
тӑн кӑшкӑрса янӑ та, Унӑн юлашки сывлӑшӗ тухнӑ. [38] Ҫав вӑхӑт-
ра Турӑ Ҫуртӗнчи чаршав ҫӳлтен аяла ҫитиччен ҫурмалла ҫу-
рӑлса аннӑ. [39] Иисуса хирӗҫех тӑракан Рим ҫӗрпӗвӗ вара, Иисус
ҫапла кӑшкӑрса юлашки сывлӑшне кӑларса янине курса: «Ку
Ҫын чӑнах та Турӑ Ывӑлӗ пулнӑ-мӗн!» – тенӗ. [40] Ҫавӑнтах аяк-
ран пӑхса тӑракан хӗрарӑмсем те пулнӑ: вӗсем хушшинче Мария

---

* 15:28 Хӑш-пӗр авалхи ал ҫырусенче ку сӑвӑ ҫук.

Магдалина та, кĕçĕн Иаковпа Иосия амăшĕ Мария та, Саломия
та пулнă. 41 Вĕсем Иисус Галилейăра чухне те Ун хыççăн çӳренĕ,
Ăна пулăшнă. Унта тата Иисуспа пĕрле Иерусалима пынă ытти
хĕрарăмсем те нумайăн пулнă.

*Иисус ӳтне тупăклăха хуни*
(Мф. 27:57-61; Лк. 23:50-56; Ин. 19:38-42)

42 Çакă эрне кун пулса иртнĕ, шăмат кун вара ĕçлеме юра-
ман. Çавăнпа та, каç пулсан, 43 Аримафея хулинче çуралса ӳснĕ
Иосиф ятлă пĕр çын пынă та Иисус ӳтне ыйтма Пилат патне
хăйса кĕнĕ. Иосиф иудейсен канашĕнче хисеплĕ çын шутланнă
пулин те, хăй те Турă Патшалăхĕ килессе кĕтсе пурăннă пулнă.
44 Иисус вилнĕ ĕнтĕ тесен Пилат тĕлĕннĕ. Вара вăл çĕрпĕве чĕн-
терсе: «Иисус вилни нумай пулать-и?» – тесе ыйтнă. 45 Иисус
вилнине çĕрпӳ те пĕлтерсен, Пилат Унăн ӳтне Иосифа пама хуш-
нă. 46 Вара Иосиф йĕтĕн пир туяннă та Иисус ӳтне хĕрес çинчен
антарнă. Унтан пирпе чĕркенĕ те чул ту хысакне касса тунă ту-
пăклăха кайса хунă, шала кĕмелли шăтăк умне чул йăвантарса
хунă. 47 Мария Магдалинăпа Иосия Марийи Ăна ăçта пытарнине
пăхса тăнă.

## 16-мĕш сыпăк

*Иисус Христос чĕрĕлсе тăни*
(Мф. 28:1-8; Лк. 24:1-12; Ин. 20:1-10)

1 Шăмат каç Мария Магдалина, Иаков амăшĕ Мария тата Са-
ломия, Иисус ӳтне кайса сĕрес тесе, ырă шăршăллă çусем туян-
нă. 2 Вырсарни кун, эрнен малтанхи кунĕнче, ирпе ирех, хĕвел
тухнă вăхăтра, вĕсем тупăклăх патне кайнă. 3 Çапла вĕсем: «Ту-
пăклăх шăтăкĕ умĕнчи чула кам йăвантарса куçарса парĕ-ши пи-
ре?» – тесе пĕр-пĕринпе калаçкаласа пынă. 4 Çитсессĕн пăхнă та
курах кайнă: хайхи пысăк чула куçарса та хунă иккен. 5 Унтан,
тупăклăха кĕрсен, вĕсем сылтăм енче шап-шурă тум тăхăннă пĕр
çамрăк ларнине асăрханă. Вара хĕрарăмсем тĕлĕннипе питĕ хă-
раса ӳкнĕ. 6 «Ан хăрăр, – тенĕ ангел вĕсене. – Эсир хĕрес çине
пăталанă Назаретри Иисуса шыратăр вĕт. Вăл вилĕмрен чĕрĕл-
нĕ. Вăл кунта çук халĕ. Акă Ăна хунă вырăн. 7 Çапах та эсир
Унăн вĕренекенĕсене тата Петра: „Иисус сире Хăй каланă пекех

Галилейăра тĕл пулĕ, эсир Ăна унта курăр“, — тесе кайса калăр».
[8] Вара вĕсем тупăклăхран тухса тарнă, тĕлĕннипе питĕ хăраса
ӳкнĕ. Хăранăран вара никама та ним те каламан.

*Чĕрĕлсе тăнă Христос Мария Магдалинăна*
*тата икĕ вĕренекенне курăнни*
(Мф. 28:9-10; Лк. 24:13-35; Ин. 20:11-18)

[9] Эрнен малтанхи кунĕнче, вырсарни кун, ирпе ирех чĕрĕлсе
тăнă хыççăн Иисус чи малтан Хăй унччен çичĕ усал сывлăша
хăваласа кăларнă Мария Магдалинăна курăннă. [10] Мария çакăн
çинчен Иисуспа пĕрле пулнисене, татăлса йĕрекенскерсене, кайса
каласа кăтартнă. [11] Анчах та вĕсем Иисус чĕрĕ пулнине те, Ма-
рия Ăна курнине те ĕненмен. [12] Кайран Иисус çав ĕненменни-
сенчен иккĕшне, вĕсем пĕр яла кайнă чухне, çул çинче урăх
сăн-сăпатлă пулса курăннă. [13] Вара хайхисем каялла таврăннă
та ыттисене каласа кăтартнă, анчах вĕсене те ĕненмен.

*Чĕрĕлсе тăнă Иисус вун пĕр апостола курăнни*
(Мф. 28:16-20; Лк. 24:36-49; Ин. 20:19-23; Ĕç-хĕл. 1:6-8)

[14] Юлашкинчен Иисус вун пĕр вĕренекенне каçхи апат çисе
ларнă чухне курăннă. Иисус вĕсене чунĕсем уçăлса çитейменшĕн,
Хăй чĕрĕлсе тăнă хыççăн Ăна куракансене ĕненменшĕн ӳп-
келенĕ. [15] Унтан Иисус вĕсене çапла каланă: «Кайăр та пĕтĕм
тĕнчипех пурне те Ырă Хыпар вĕрентсе çӳрĕр. [16] Кам ĕненсе шы-
ва кĕрĕ, çав çăлăнĕ. Кам ĕненмĕ, çавна юлашки судра айăплĕç.
[17] Ĕненекенсем çак хăватсене тума пултарĕç: Ман ятăмпа усал-
сене хăваласа кăларĕç; хайсем халиччен пĕлмен чĕлхесемпе ка-
лаçĕç; [18] çĕленсене алла тытĕç; пĕр-пĕр наркăмăш ĕçсен те сиен-
ленмĕç; чирлисем çине аллисене хурсан, лешсем сывалĕç».

*Иисус Христос тӳпене çĕкленни*
(Лк. 24:50-53; Ĕç-хĕл. 1:9-11)

[19] Çапла Хуçамăр, вĕренекенĕсемпе калаçнă хыççăн, тӳпене çĕк-
леннĕ те Туррăн сылтăм енне ларнă. [20] Вара вĕренекенĕсем кайнă
та пур çĕрте те ӳкĕтлесе вĕрентнĕ; Хуçамăр вĕсене пулăшсах тăнă,
хăватсем кăтартса вĕсен сăмахĕсене çирĕплетнĕ. Аминь*.

---

* 16:20 Хăш-пĕр авалхи ал çырусенче 9-20-мĕш сăвăсем çук.